БИБЛИОТЕКА ...

ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Декабрь
15
ЫТЛАРИКУН
№ 244 (9153)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ПИЛЛĔКМĔШ СЕССИЙĔ. Сесси дневникĕ (1—2 стр.).
Г. Алексеев.—Пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе ĕçлесси (2 стр.).
Тракторсене вăхăтра тата лайăх юсамалла: В. Тонышев.—Механизаторсен хастарлă ĕçĕ; Ф. Кондратьев.—МТС-ăн договора пурнăçламалла (2 стр.).
И. Железнов.—Министерствăсем производство ушшисене тĕплĕн шута илме тивĕç (3 стр.).
А. Тукмаков.—Ӳсĕм çулĕ çинче (3 стр.).
Р. Малютин.—Кунта пысăк сад пулать (3 стр.).
Александра Лазарева.—Матĕрне нике пĕччен мар, Калав (3—4 стр.).
СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче (4 стр.).
Н. Захаров.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ вĕçленнĕ (4 стр.).
Демократиллĕ Германи Республикин Министрĕсен Совечĕн ларăвĕнче (4 стр.).
Польшăри ялхуçалăхне механизацилесçĕ (4 стр.).

Çуракине тĕплĕн хатĕрленесси— ялхуçалăх ĕçченĕсен чыслă тивĕçĕ

КПСС Чăваш обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ 1954 çулхи çуракине хатĕрленесе иртерес енĕпе облаçри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе явнĕ. Пленум йышăннă решенире çитес çуракине хатĕрленес тата ăна ытти çулсенчинчен лайăхрах иртерес тĕлĕшпе парти. совет. профсоюз тата комсомол организацийĕсемпе ялхуçалăх органĕсем халех вăхăтра тумалли ĕçсене тĕплĕн кăтартса панă.

Пирĕн республикăри ялхуçалăх ĕçченĕсем, хамăр çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановление ăнăçлă пурнăçлас тесе хастарлă ĕçлеççĕ. Республикăри нумай колхозсемпе МТС-сем ялхуçалăхĕнчи кăçалхи ĕçсене, пĕтĕмешпе илсен, лайăхрах туса пычĕç. çитес çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе те ĕçсем пелтĕрхинчен йĕркеллĕрех пулса пыраççĕ. Çапах та партин тата советсен вырăнти организацийĕсем, ялхуçалăх органĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановленире палăртнă ĕçсене питĕ çителĕксĕр пурнăçлаççĕ-ха. Уйрăмах МТС-сене—инженерсемпе техниксем, колхозсене—агрономсемпе зоотехниксем парса пулăшас ĕç вăраххăн пулса пырать.

Партин нумай райкомĕсем тата МТС директорĕсем колхозсене янă специалистсен ĕçне организацилесе ертсе пымаççĕ, çав кадрсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатма тивĕçлипе тăрăшмаççĕ. Пур районсенче те тенĕ пекех пысăкрах квалификациллĕ специалистсене экономика тĕлĕшĕнчен вăйлă тата район центрĕсем çывăхĕнчи колхозсене янă, çапла вара хуçалăхпа организаци тĕлĕшĕнчен каярах юлнă колхозсене пуринчен малтан кадрсемпе çирĕплетме кирли çинчен манаççĕ.

Çитес çуракинче МТС-сен колхозсене иртнĕ çулхинчен нумайрах ĕç туса памалла пулать. Сăмахран, çĕртме сӳхи тăвас, курăк вăррисем пуçса кĕртес тата ытти нумай ĕçсене пĕтĕмпех механизацилесе çитермелле. 1954 çулхи план тăрăх, тĕштырă, çĕрулми, пахча çимĕç, техникăлла культурăсем, нумай çул ӳсекен курăксем акмалли лаптăка пысăклатнипе пĕрлех, вĕсен тухăçлăхне татăклăнах ӳстерме, çав культурăсене акса тăвас ĕçе нумай механизацилеме палăртнă. Çакă вăл колхозсемпе МТС-сене пултаруллă кадрсемпе çирĕплетес, механизаци кадрĕсем хатĕрлес тата колхозниксене агрозоотехника курсĕсенче вĕрентес ыйтусем çине тимлĕ пăхма хушать. Колхозсемпе МТС-сем валли кирлĕ кадрсене тĕрĕс суйласа илсе ĕçе вырнаçтарасси, вĕсене воспитани парасси тата çав кадрсен пултаруллăхне квалификацине пĕрмай ӳстерсе пыма тăрăшасси парти организацийĕсен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнмалла.

КПСС обкомĕн пленумĕ çакна палăртрĕ: çуракине хатĕрленесси нумай районсенче çителĕксĕр пулса пырать. Ялхуçалăх министерстви тата чылай МТС-сем малтанах тĕплĕн хатĕрленмен пирки тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçе япăх организациленĕ Уйрăмах Куславкка, Муркаш, Калинино, Çĕмĕрле тата Первомайски МТС-ĕсем юса пыраççĕ. Çак МТС-сенче тракторсене узловой меслетпе юсассине хаклаçмаççĕ, мастерскойсенче рабочисен ĕçне йĕркелемеççĕ, машинăсене начар юсаççĕ. Рабочисем пурнăçпа йăла условийĕсем çителĕксĕр пулни те пысăк чăрмав кӳрет. Нумай МТС-сенче механизаци кадрĕсем çитмеççĕ пулин те, вĕсене хатĕрлеме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Канашпа Етĕрнери механизаци училищисем начар ĕçлеççĕ, анчах Ялхуçалăх министерстви, КПСС Канаш хула комитечĕ тата Етĕрне райкомĕ, Советсен вырăнти исполкомĕсем çак училищисен ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

МТС-семпе колхозсен нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлекен республикăри ытти организацисен çаврăнăçусăрлăхне те палăртас пулать. Вырăнти тата топливо промышленность министерстви предприятийĕсем колхоз хуçалăхĕнче кирлĕ япаласем сахал туса кăлараççĕ. кăларнисем те пахалăх тĕлĕшĕнчен начар пулаççĕ.

КПСС обкомĕн пленумĕ Ялхуçалăх министерствине, парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсене МТС-сене ертсе пырас ĕçе тĕпренех лайăхлатма, кашни машина-трактор станцине çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрлесе çитерме хушрĕ. Сĕрĕçпе мыхьăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç культурине ӳстерес, ялхуçалăх наукин çитĕнӳĕсене тата малта пыракансен опытне колхоз производствине кĕртсе пырас тĕлĕшпе МТС-семпе ялхуçалăх специалисчĕсен организаторла рольне пысăклатни кирлĕ. Ялхуçалăх министерствин, КПСС райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен тата МТС директорĕсен тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçри хальхи çитменлĕхсене халех пĕтерсе, МТС-сенчи тата колхозсенчи мĕнпур машинăсене, ĕç хатĕрĕсене правительство кăтартса панă срокĕсенче юсаса пĕтермелле тăвас пулать. МТС-семпе колхозсем хушшинче договорсем тăвасси çине те тимлĕ пăхни кирлĕ. Кашни договора колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе явмалла, договорсене икĕ енĕн те вăхăтра пурнăçласа пымалла тăвас пулать.

Машинăсемпе ытти ĕç хатĕрĕсене лайăх юсаса хатĕрленипе пĕрлех, ытти ĕçсем çинчен те манма юрамасть. Вăрлăх ыйтăвĕнех илер-ха. Ответлăха туйманнипе пула Советски, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри тата Пăрачкав районĕсенчи чылай колхозсенче вăрлăх фондне тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем халĕ те хывса çитермен-ха. Колхозсем тымарçимĕçсемпе пахча çимĕç культурисен вăрлăхне туянма васкамаççĕ. Чкаловски, Елчĕк, Первомайски, Шăмăршă тата Вăрмар районĕсенчи колхозсене вăрлăхлăх çĕрулми уйăрса çитермен.

КПСС обкомĕн пленумĕ 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнпур культурăсем тăрăх вăрлăх фондне кирлĕ чухлĕ хывса çитерме хушрĕ. Апла пулсан, хăвăртрах авăн çапса пĕтерес пулать, çитмен вăрлăха улăштарса илмелле, государство склачĕсенчен сортлă вăрлăх илес ĕçе те васкатмалла.

1954 çулта техникăлла тата выльăх апачĕ валли каякан культурăсем, çĕрулми, пахча çимĕç нумайрах акса-лартма палăртнă. Çавăнпа та йĕтĕнпе кантăр, çĕрулми, нумай çул ӳсекен курăксен, пахча çимĕç, кукуруза, хĕвелçаврăнăш тата ытти культурăсен вăрлăхне кирлĕ чухлĕ хатĕрлес пулать. Çак культурăсене акмалли плана колхозсем, районсем тăрăх обязательнăй йĕркепе тултармалла. Хатĕрленĕ мĕнпур вăрлăха сортласа тасатмалла, лабораторисенче тĕрĕслеттерсе пăхмалла, лайăх упраса усрамалла.

Хĕллехи вăхăтра тумалли агротехникăлла ĕçсене çирĕп пурнăçласа пырас пулать. Вырăнти удобренисем ытларах пуçса, вĕсене уй-хире кăларма лайăх хатĕрлени кирлĕ. Удобренисене тĕллипаллисĕр усă курнине пĕтерес пулать. Çитес çураки валли пур колхозсем те минераллă удобренисем çителĕклĕ туянма пултараççĕ. Вĕсене колхоза турттарса пыма халех тытăнмалла. Пӳсĕк çĕрсем çине сапма известь ытларах хатĕрлесе, ăна вĕтетсе хурас пулать. Уй-хирсенче юр тытса хăварма панă задание кашни колхозăн тултармалла.

Çуракине хатĕрленес ĕçре МТС-семпе колхозсене хуласенчи предприятисем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Вĕсем МТС-семпе колхозсене машинăсене юсама, теплицăсемпе парниксем тума, производство валли тĕрлĕ çурт-йĕрсем лартма тата вĕсене пахa оборудованипе пуянлатма пулăшма пултараççĕ. Хуласенчи партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсен ялсенче политикăлла-массăлла ĕçе лайăхрах йĕркелеме активлăн хутшăнас пулать.

Паллах, çитес çуракине иртерме лайăх хатĕрленесси ку ĕçе мĕнпур колхозниксене, механизаторсене, ялхуçалăх специалисчĕсене хутшăнтарсан кăна ăнăçлă пулма пултарать. Парти организацийĕсен ялхуçалăх ĕçченĕсен производствăлла тата политикăлла активлăхне кулленех пусарса ертсе пымалла. Парти райкомĕсен колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен кĕрешӳри пултаруллăхне тата вĕсен организаторла рольне ӳстерсе пырас пулать. Политикăлла-массăлла пĕтĕм ĕçе уй-хир бригадисенче, МТС мастерскойĕсенче тума пымалла. Колхозниксен, механизаторсен, ялхуçалăх специалисчĕсен, колхозсемпе МТС-сен социализмла ăмăртăвне анлăрах сармалла тата ăна кулленех ертсе пымалла. Ялти культурăпа сутĕç учрежденийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатни кирлĕ.

Çитес çуракине хатĕрленсе ăнăçлă иртересси — хуçалăхпа политикăлла пысăк задача. Çакна шанса тăма пулать: республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви социализмла ялхуçалăхне малалла аталантарассишĕн тăрăшнине хавхаланса, çитес çуракине лайăх хатĕрленсе кăтартуллă иртерĕç, 1954 çулта вăйлă тырпул туса илме çирĕп никĕс хывĕç.

В. П. Чкалова асăнса

Пирĕн вăхăтри аслă летчик В. П. Чкалов паттăр вилĕмпе вилни, декабрĕн 15-мĕшĕнче, 15 çул çитрĕ. Столицăри клубсенче тата Мускав гарнизонĕнчи офицерсен çуртĕсенче В. П. Чкалова асăнса каçсем иртереççĕ, докладсемпе лекцисем туса параççĕ.

Декабрĕн 13-мĕшĕнче М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан авиаци çуртĕнче В. П. Чкалова асăнса каçсем иртерчĕ. Унăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Совет Союзĕн Геройĕ М. Т. Слепнев доклад турĕ. Совет Союзĕн Геройĕсем Г. Ф. Байдуков тата А. В. Беляков В. П. Чкалов çинчен аса илсе каларĕç. Унтан концерт пулчĕ. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ПИЛЛĔКМĔШ СЕССИЙĔ

СЕССИ ДНЕВНИКĔ

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн декабрĕн 11-мĕшĕнчи ларăвĕнче Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Афанасьев депутат «РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановлени» пирки доклад турĕ хыççăн прениссем пуçланнă.

Чи малтан Н. Никитин депутат сăмах илет.

— Россия Федерацийĕн правительстви,—тет вăл,—Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хуçалăхпа культура строительствине çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕ. Кун пек хак пани тĕрĕс. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ министерствăсене, управленисене, районсемпе хуласенчи исполкомсене, çавăн пекех хуçалăх организацийĕсене конкретлă ертсе пыни çук-ха.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ решенисем сахал мар йышăнать, анчах вĕсенчен чылайăшĕ конкретлă мар. Сăмахран, Министрсен Совечĕ кăçалхи март уйăхĕнче Шупашкар хула исполкомĕн отчечĕ тăрăх решени йышăнчĕ. Ку решенире Шупашкар хула исполкомĕ культурăпа йăла учрежденийĕсем лартас ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине тĕрĕс палăртнă. Хулара пурăнмалли çуртсене юсас ĕçе япăх йĕркеленĕ. Хула исполкомĕ вырăнти промышленноçа начар ертсе пырать.

Анчах Министрсен Совечĕ çав решение Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ пурнăçламалла туман. Шупашкар хулинче пурăнмалли çуртсене, больницăсене, шкулсене, ача садĕсене япăх юсаççĕ. Ремонтпа строительство кантурĕн техника сахал. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ умне Шупашкар хулинче ремонтпа строительство бази тăвасси çинчен пĕр хут кăна мар ыйту тăратнă. Анчах Министрсен Советĕнче çак питĕ кирлĕ ыйту çине çиелтен пăхнă.

Малалла Никитин юлташ шкулсен, суту-илӳпе хуçалăх организацийĕсен, сывлăх учрежденийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен калать.

О. Мадюшкина депутат (Хĕрлĕ Чутай районĕ) Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ялсенчи сывлăх учрежденийĕсене, шкулсене, культурăпа сутĕç учрежденийĕсене çителĕксĕр ертсе пынине палăртать. Хĕрлĕ Чутай районне яланлăха ĕçлеме виçĕ врач, 9 фельдшер тата 6 медсестра ямалла пулнă, халĕхе пĕр врачпа 5 фельдшер анчах пынă. Паньтăк больницинче виçĕ çул хушши ĕнтĕ пĕр врач анчах ĕçлет.

Культурăпа сутĕç учрежденийĕсем начар ĕçлеççĕ. Ялти библиотекăсен хăйсен пӳлĕмсем çук. Хĕрлĕ Чутай районĕнче ялсенчи 10 библиотекăран Туктамăшри библиотекăн кăна хăйĕн пӳлĕмĕ пур.

Мадюшкина депутат суту-илӳ организацийĕсене критиклет, вĕсем ялсенче краçын, пăта, çуртсем çине витмелли материалсем сутассине начар йĕркеленĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви,—тет А. Симакова депутат, — пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен кулленех ӳссе пыракан ыйтăвĕсене чи тулли тивĕçтерессишĕн ялан тимлĕн тăрăшаççĕ.

А. Симакова депутат Улатăр хулинчи суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклет. Улатăр хулинчи магазинсенче ачасем валли кĕпе, вĕренме кирлĕ хатĕрсем тупса илме те питĕ йывăр.

Коммунальнăй хуçалăх министерстви Улатăр хулин нушисем çине çителĕксĕр пăхать. Темиçе çул хушши ĕнтĕ коммунальнăй электростанци начар ĕçлет. Коммунальнăй хуçалăх министрĕ Волков юлташ çак ыйтупа кирлĕ пек интересленмест.

Симакова депутат Улатăр хулинче пурăнмалли çуртсем тата канализаци тума кирлине палăртать.

Н. Албутов депутат РСФСР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем пирки йышăннă постановленире Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине питĕ тĕрĕс кăтартса панă. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлениє пурнăçлас тĕлĕшпе республика Министрĕсен Совечĕ мĕнле ĕçсем тумаллине халиччен те палăртман.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçри çитменлĕхĕсене критиклесе, Албутов юлташ Чăваш АССР Госпланĕ, тĕрĕссипе илсен, вак-тĕвек ĕçсем тăвакан пай кăна пулса тăнине палăртать. Госплан хăйĕн ĕçĕсене кирлĕ пек туса пымасть. Вăл районсемпе хуласем планĕсемпе плансене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемест. Госплана ĕçлекенсем районсенче сайра хутра кăна пулаççĕ. Районсенчи план комиссийĕсем те начар ĕçлеççĕ.

Вырăнти тата топливо промышленность министерстви предприятисене çиелтен ертсе пырать. Министр Бобров юлташ кадрсене суйласа илмелли партилле принципа пăсать. Пăрачкав районĕнче çав министерствăн пĕр предприятийĕ, вĕсем нихăшĕ те начар ĕçлеççĕ.

Пĕлтĕр Бобров юлташ Пĕнерçри вăрманпромхоз директорĕ пулма Воронков юлташа уйăрса лартнă, ăна малараx ĕçсене япăхтарса янăшăн Сĕнтĕрвăрри вăрманпромхоз директорĕнчен кăларнă пулнă. Çавăн пек çитменлĕхсем тунăшăнах Воронкова часах ĕçрен кăлармалла пулчĕ. Ун вырăнне Павлов килчĕ, ăна та Канашри «Красный воин» артель председателĕнчен кăларнă пулнă. Вăрманпромхозра ĕçсем çав-çавах начар пулса пыраççĕ, вăл плана тултараймасть.

Малалла Албутов юлташ Суту-илӳ тата Сывлăх министерствисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе унăн председателĕ Афанасьев юлташ, тет юлашкинчен оратор, тĕрлĕ директивăсемпе постановленисем йышăнса вăхăт нумай иртереççĕ. Министрсен Совечĕн хăйĕн ĕçне тĕпрен лайăхлатмалла, вырăнти Советсем çине таянса ĕçлемелле.

М. Филиппова депутат Россия Федерацийĕн правительстви йышăннă постановление хăвăртрах пурнăçлама тата хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырассине лайăхлатма кирлине палăртать.

Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх министрĕ Н. Волков юлташ республикăри коммунальнăй строительство валли укçа-тенкĕ уйăрса парасси çултан çул ӳссе пыни çинчен каласа парать. Коммунальнăй предприятисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Министерство государство уйăрса паракан укçа-тенкĕпе туллин усă кураймасть. Министерство пурăнмалли çуртсем тума техникăлла документаци вăхăтра хатĕрлесе параймасть.

Декабрĕн 11-мĕшĕнче пулнă ларура юлашкинчен Шăмăршă райсовет исполкомĕн председателĕ А. Васильев юлташ сăмах туса калатнă. Вăл Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ райисполкома тивĕçлĕ пулăшу паманни çинчен калать. Республикăн Министрсен Совечĕ министрсемпе управлени руководителĕсен ĕçри ответлăхне ӳстерме тăрăшмасть, пĕтĕм ответлăха вырăнти Совет тата парти органĕсем çине хума пикенет, терĕ вăл.

Пĕррехинче пирĕн района республикăри Ялхуçалăх министерствин бригади килчĕ,—тет Васильев юлташ.—Бригада ялхуçалăх специалисчĕсен канашлăвне ирттернипех лăпланчĕ, унта колхозсемпе МТС ĕçĕсенчи хăшпĕр çитменлĕхсене кăна палăртса хăварнă.

Ялхуçалăх министерстви ĕçсене тивĕçлипе ертсе пыма, МТС-сен ĕçне тĕпчесе вĕренме тăрăшмасть, вырăнти органсене начар пулăшать. Сывлăх тата социальнăй обеспечени министерствисем те вырăнсенчи органсен ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтермеççĕ.

Васильев юлташ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ республикăри колхозсемпе МТС-сенче ĕçсем мĕнле пулса пынине начар пĕлнине палăртать. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн работникĕсен вырăнсене час-часах тухса çӳремелле, райсовет исполкомĕсене тата вырăнти Советсене практикăлла ĕçе йĕркелеме пулăшмалла.

Çакăнпа Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăннă.

• • •

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн декабрĕн 12-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Н. А. Афанасьев депутат «РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановлени» пирки тунă доклад тăрăх прениссем пынă.

Прениссем Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн, министерствăсемпе ведомствăсен, вырăнти Советсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çивĕч те тĕрĕс критиклениле иртнĕ. Республикăри совет органĕсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн тата СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕн решенийĕсене, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн тата ун хыççăн партипе правительство ялхуçалăхне малалла аталантарасси çинчен, промышленноçăн апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстересси, таварсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен, совет суту-илĕвне малалла аталантарасси çинчен йышăннă постановленисене пурнăçлас ĕçри çитменлĕхсене депутатсем хăюллăн палăртрĕç. Вĕсем республикăри хуçалăхпа культура строительствинчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелли мелĕсене кăтартса пачĕç.

Улатăр хула Совет исполкомĕн председателĕ М. Харитонов юлташ хăйĕн сăмахĕнче хулари çĕнĕ электростанцие вăраххăн туни çинчен, Улатăр хулинче çĕнĕ водопровод тăвас ыйтăва хăвăртрах татса пама кирли çинчен каларĕ.

— Правительство, — терĕ вăл,—пире тăпра ишĕлнине хирĕç кĕрешме 15 миллион тенкĕ пачĕ Эпир тăпра ишĕлнине пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртеретпĕр Анчах çав ĕçсен результачĕсем çителĕксĕр-ха. Сăлтавĕ—хулара канализаци çукки. Хулари промышленность предприятисенчен тухакан шыв тата хула халăхĕ тăкакан шывсем сăрхăççĕ те тăпрана ишĕлессине татах вăйлатаççĕ, çавăн пирки пурăнмалли çуртсем, учрежденисемпе предприятисен çуртĕсем ишĕлеççĕ.

Пирĕн хулара канализаци тăвасси çинчен эпир темиçе хутчен те ыйту лартрăмăр, анчах ку ыйтăва халиччен те татса паман.

Пирĕн хулара 3 пин студент ытла шутланать, ача учрежденийĕсем, больницăсем пур. Çав хушăрах прачечнăй çук. Хулари ĕçсыннисем çак ыйтăва темиçе хутчен те хускатнă. Çакна та хăвăртрах татса пама кирлĕ.

— РСФСР Министрĕсен Совечĕ,—терĕ хăйĕн сăмахĕнче И. Молодов депутат пирĕн республикăн Министрĕсен Совечĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене питех те тĕрĕс палăртнă. Пирĕн задача—РСФСР Министрĕсен Совечĕн постановленине пурнăçласа пырса, промышленность, ялхуçалăх, культура строительстви енĕпе хамăрăн мĕнпур ĕçе кĕске вăхăт хушшинчех лайăхлатасси пулать.

Малалла Молодов депутат халăх хушшинче культурăлла-массăлла ĕçе лайăхлатма кирли çинчен, творчествăлла организацисен ĕçне вăйлатмалли çинчен калать.

Бĕрбуннепе хĕллехи вăхăтра пирĕн çамрăксем пушă вăхăта клубсенче, вулав çурчĕсенче, хĕрлĕ кĕтессенче иртерме тăрăшаççĕ. Вĕсем çав учрежденисен руководителĕсенчен культурăлла-массăлла ĕçе лайăхлатма ыйтни тĕрĕс те вырăнлă. Анчах вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтересси çинчен нумай чухне манаççĕ. Улатăрта чугун çул работникĕсен клубĕ ĕçлеме чарăннăранпа пĕр уйăх çитрĕ, Пăрачкаври клуба вут хутса ăшăтмаççĕ, Шăхасанти Культура çурчĕ пĕчĕккĕ, унта массăлла ĕçсем туса иртерме май çук. Çавăн пек тĕслĕхсене нумай илсе кăтартма пулать. Пирĕн республикăри клубсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене нумаях пулмасть «Правда» хаçат критиклерĕ. Анчах çав çитменлĕхсене пĕтерес ĕç вăраххăн пырать.

— Пирĕн республикăра,—тет малалла Молодов депутат,—творчество ĕçĕн кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕç çине çителĕксĕр пăхаççĕ. Чăваш академи театрĕ 1947 çултанпа çамрăк кадрсем илеймест. Çав кадрсене вĕрентсе хатĕрлемеççĕ. Культура министерствин театрсен, филармонин ĕçĕсене лайăхлатма тăрăшмалла, Чăваш совет писателĕсен Союзĕ пире чăвашсен пурнăçĕнчен илсе çырнă идея тĕлĕшĕнчен пахa произведенисем пама тивĕç.

Юлашкинчен Молодов депутат çĕнĕ театр тăвас, филармоние уйрăм çурт парас ыйтăва хăвăртрах татса пама кирли çинчен, художество тата музыка училищисенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатасси çинчен, çав училищисем валли уйрăм çуртсем тума кирли çинчен калать.

Е. Дмитренко депутат хăйĕн сăмахĕнче суту-илĕве ертсе пырас ĕçе лайăхлатма кирли çинчен, магазинсен шутне, уйрăмах хула хĕррипчи урамсенче нумайлатасси çинчен, кашни суту-илӳ организацийĕн тавар çаврăнăш планне тултармалли, социализмла харпăрлăха çаратакансене хирĕç кĕрешĕве вăйлатмалли, вырăнти тата кооператив промышленноçĕ плансене тултармалли, çавăн пекех ĕçсыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтеревен мастерскойсен ĕçне лайăхлатмалли çинчен калать.

— Пирĕн хулари промышленность, — тет Канаш хула Совет исполкомĕн председателĕ С. Синицын юлташ,—кăçалхи 11 уйăхри производство планне 107 процент тултарчĕ. Хулари 19 промысла артелĕнчен вунăшĕ çултахи плана СССР Конституци кунĕ тĕлне пурнăçларĕç.

Хулари предприятисенче малта пыракан меслетсене ĕçе кĕртессишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Вагонсем юсакан заводра 180 рабочи пилĕк çуллăх норминă тултарчĕç, 2 пине яхăн рабочи çулталăк нормисене пурнăçларĕç, халĕ вĕсем 1954 çул шучĕпе ĕçлеççĕ. Стахановецсен йышĕ хулари ытти предприятисенче те ӳссе пырать.

Унтан Синицын юлташ хула Совечĕ хуçалăхпа культура строительствине мĕнле ертсе пыни çинчен калать тата республика Госпланне критиклет.

— Госплан председателĕ,—тет вăл,— Канаш хулин ыйтăвĕсене тивĕçлипе пăхса тухмасть. Госплан хулана кирлĕ чухлĕ материалсем уйăрса памасть. Хулари поликлиникăна юсама кăçал 17 пин тенкĕ укçа кирлĕччĕ, анчах 2 пин тенкĕ кăна уйăрса пачĕç. Ĕçе юрăхлă йывăç 2.200 кубометр кирлĕ пулнă пулсан, эпир пĕр пин кубометр кăна илтĕмĕр. Госплан кирпĕч виççĕмĕш квартал вĕçленнĕ е тăваттăмĕш квартал пуçланнă чухне тин уйăрса парать. Ун чухне юсав ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ вĕт-ха. Кăçал пире 175 пин штук кирпĕч кирлĕччĕ, илесси вара 71 пин штук кăна илтĕмĕр.

Малалла Синицын юлташ Коммунальнăй хуçалăх министерствипе министр Волков юлташа пурăнмалли çуртсене юсас тата куллен кирлĕ япаласем юсамалли мастерскойсем лартас ĕçре пулăшманшăн критиклет.

С. Никитин депутат Вăрнар районĕнчи промышленность предприятийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен, районти организацисем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановление çителĕксĕр пурнăçласа пыни çинчен калать.

Ĕçсынни депутачĕсен Канаш райсовет исполкомĕн председателĕ Н. Соловьев юлташ республикăри Ялхуçалăх министерствипе Госплана критиклет. Районти колхозсенче, тет вăл, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çитмест. Çавăнпа та утă-улăмпа перекетлĕн усă курас пулать. Анчах кормозапарниксем çук пирки колхозсем улăм-арпана пăспа çемçетсе хатĕрлеймеççĕ.

Районти нумай колхозсенче кормозапарниксем тунă. Вĕсем валли вутă нумай кирлĕ. Сăмахран, Доронин ячĕпе тăракан колхозра кашни уйăхра 150 кубометр вутă пĕтереççĕ. Районти колхозсене пĕтĕмпе 50 пин кубометр вутă кирлĕ. Анчах Госплан та, Ялхуçалăх министерстви те колхозсене кирлĕ чухлĕ вутă уйăрса памаççĕ.

Ялхуçалăх министерстви Канаш районне ăратлă выльăхсем пама тăрăшмасть, колхозсене электрификацилес тĕлĕшпе республикăри Министрсен Совечĕ йышăннă постановление пурнăçламасть.

Соловьев юлташ Культура министерствипе министр Капитонов юлташа ялсенчи библиотекăсене, клубсене, вулав çурчĕсене çителĕксĕр ертсе пынăшăн, ялсене кирлĕ кĕнекесем ярса панăшăн критиклет. Вăл çавăн пекех Сутĕç министерствипе министр Токарев юлташ шкулсене çителĕксĕр ертсе пыни çинчен калать, Канашра шкул тума республикăри Министрсен Совечĕ йышăннă постановление пурнăçламаннине палăртать.

П. Тищев депутат сессире Госплана тĕрĕс критиклени йышăнать тата райсовет исполкомĕсем планне ĕçе лайăхлатма, предприятисен хăвачĕпе лайăхрах усă курас тата вырăнтипе кооперации промышленность ĕçне лайăхлатма кирли çинчен калать.

Н. Яковлев депутат (Сĕнтĕр районĕ, Юнкă округĕ) республикăри колхозсене çĕрулми акмалли тата кăларумалли машинăсем, корнеклубнерезкăсем, ытти ялхуçалăх машинисем ытларах кӳрсе килме кирлине палăртать.

СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ В. Ефимова Чăваш АССР Сывлăх министерствине сывлăх пайĕсен хăйсен учрежденийĕсене çителĕксĕр ертсе пыни çинчен калать.

(Малалла 2-мĕш страницăра).

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн заседанийĕ. Сессире ларакан депутатсем. Малти ретре (сулахайран сылтăмалла): М. Н. Сыгыбаев, К. Я. Яковлев, В. П. ...
Г. Зиньков фотографийĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ПИЛЛĔКМĔШ СЕССИЙĔ

СЕССИ ДНЕВНИКĔ

(Юлашкн. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Республикăн Министрĕсен Совечĕ сывлăх учрежденийĕсене кирлĕ пек пулăшса пымасть. Республикăра сĕтел-пукан тăвакан предприятисем пур, анчах больницăсенче вĕсем çителĕклĕ мар. Больницăсенче савăт-сапа, ытти хатĕрсем кирлĕ чухлĕ çук. Районсенче хула Совечĕсен исполкомĕсем сывлăх учрежденийĕсенче хĕле мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемен. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пасен, больницăсен кирлĕ вутă 80 процент чухлĕ кăна пунă. Çĕрпӳри, Шăхасанти, Сĕнтĕрти больницăсен, фельдшер-акушер пункчĕсен чылайăшĕн вутă пачах çук, анчах вырăнти Советсем çакăн çине çаврăнса пăхмаççĕ.

* * *

— Республикăн Министрĕсен Совечĕн ертсе пыракан работникĕсем,—тет П. Григорьев депутат (Шупашкар районĕ, Çĕньял округĕ),—районсенче сайра хутра кăна пулаççĕ, ĕçсем мĕнле пынине сводкăсемпе отчетсем тăрăх хаклаççĕ. Пĕр вăхăтра районсенче ял Совет председателĕсен семинарĕсем пулатчĕç, унта министрсем, управлени начальникĕсем тата ытти ертсе пыракан работниксем докладсем туса паратчĕç. Анчах çак пахa ĕç халĕ манăçа тухнă. Министрсен Совечĕн работникĕсем райсовет сессийĕсенче те пулмаççĕ.

Социальнăй обеспечени министрĕ **А. Воронцова** депутат партипе правительство Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе ĕç инвалидĕсене, вăрçăра вилнисен çемйисене пысăк пулăшу пани çинчен калать. Вăл ку ĕçе лайăхлатма сĕнӳсем парать.

О. Ермакова (Йĕпреç районĕнчи Йĕпреç-Покровски округ) тата **Н. Захаров** (Етĕрне районĕнчи Палтай округĕ) депутатсем тухса каланă хыççăн, сесси ларăвĕнче парти обкомĕн секретарĕ, СССР Верховнăй Совечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ **Т. А. Ахазов** юлташ сăмах тухса калать.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн тата партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсемпе, партипе правительство халăхăн пурнăçпа культура тĕлĕшĕнчи ӳсĕ пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтермелле тăвасси çинчен йышăннă постановленисемпе хавхаланса,— тет Ахазов юлташ,—Чăваш республикинчи ĕçсыннисем хамăр республикăн халăх хуçалăхĕпе культурине вăйлатассишĕн, Совет государствин хăватне малалла тĕреклетсе пырассишĕн малашне те активлă кĕрешме хатĕр.

Пирĕн республика тунă çитĕнӳсем пĕчĕк мар. Анчах эпир, совет çыннисем, тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр, ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине курмасăр тăма пултараймастпăр. Парти пире ĕçри çитменлĕхсене хăюллăнрах уçса палăртма тата вĕсене хăвăртрах пĕтерме вĕрентет.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен отчет итлесе, РСФСР Министрĕсен Совечĕ Чăваш республикинче хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕç çителĕксĕр пулса пырать, тесе йышăнчĕ. РСФСР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕнче Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçне тĕрĕс хак панă. Ĕç чăннипех çавăн пек пулни сессире депутатсем каланă чухне илсе кăтартнă нумай тĕслĕхсенчен курăнать. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн отчетне РСФСР Министрĕсен Советĕнче сӳтсе явни Росси Федерацийĕн правительстви пире пулăшни аслă вырăс халăхĕ Чăваш республикинчи ĕçсыннисен материальнăй пурнăçĕпе культурин шайне малалла ӳстересе пыма пулăшни пулать. РСФСР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕнчен пирĕн республикăн Министрĕсен Совечĕ, çавăн пекех вырăнти Советран пурин те тивĕçлĕ вывод туса, хăйсен ĕçне партипе правительство хушнă пек урăхлатса çĕнетмелле.

Пирĕн республикăн Министрĕсен Совечĕн ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри ялхуçалăхне çителĕксĕр ертсе пыни пулать тесе каланан юлташсемпе эпĕ килĕшетĕп. Ялхуçалăхĕнче эпир хамăрăн пысăк майсемпе начар усă куратпăр.

Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ постановлени йышăннăранпа вăхăт чылай иртрĕ. Анчах пирĕн республикăн Министрĕсен Совечĕ, Ялхуçалăх министерстви, Советсем, партин вырăнти органĕсем, ялхуçалăх органĕсем ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçе партин Центральнăй Комитечĕ хушнă пек урăхлатса çĕнетессине вăраххăн пурнăçласа пыраççĕ. Çаксене пурне те РСФСР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕнче тĕрĕс палăртнă, парти обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ те çак çитменлĕхсене палăртрĕ.

Т. А. Ахазов депутат хăйĕн сăмахĕнче уйрăмах юлса пыракан колхозсене ертсе пырассине, бригадирсем тата выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем пулса ĕçлеме кадрсем суйласа илес тата вĕсене воспитани парас ĕçсене лайăхлатас, МТС-сене специалистсемпе механизаторсем парса тĕреклетес, колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлесе çитерес, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарас, çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленес, райсовет исполкомĕсем енчен колхозсемпе МТС-сене ертсе пырассине лайăхлатас ыйтусем çинчен тĕплĕн чарăнса тăрать.

Республика промышленноçĕ умĕнче тăракан задачăсем çинче тата промышленноçпа транспорт предприятийĕсене ертсе пырас ыйтусем çинче чарăнса тăрса, Ахазов юлташ çакна палăртать: Министрсен Совечĕ тата Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Полукаров юлташ промышленность предприятийĕсен ĕçне тĕплĕн хутшăнмаççĕ. Промышленность предприятийĕсемпе артельсен нумай руководителĕсем чĕртавар уйăрса парасса шанса лараççĕ, вырăнта чĕртавар тупас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Вырăнти тата топливо промышленность министерстви производство программине тултарса пымасть, промышленноçа малалла аталантарас тĕлĕшпе питех те начар ĕçлет, уйăрса панă укça-тенкĕпе усă курма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

Вăрман промышленность предприятийĕсем тăтăшах юлса пынине йĕркеллĕ ĕç тесе шутлама çук. Вăрман промышленность предприятийĕсем кăçал государствăна 16 миллион тенкĕлĕхе яхăн йывăç парса çитерхен.

Министрсен Совечĕн, министерствăсен, район тата хула Совет исполкомĕсен ĕçе конкретлă ертсе пырас пулать, ĕçĕн тĕпне-йĕрне пĕлес пулать, министерствăсен, ведомствăсен, райисполкомсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăхăтра палăртас пулать.

Министрсен Совечĕн ĕçĕсене пăхса тухнă май, тет депутат Т. А. Ахазов, хамăрăн ĕçри çитĕнӳсене тишкерсе хаклас пулать, ĕçсыннисене партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама, халăх хуçалăхне хăвăртрах çĕклентерме мĕнпур майсемпе усă курма мобилизацилес пулать.

— «Новая жизнь» колхоз,—тет **Л. А. Александрова** депутат (Çĕмĕрле районĕнчи Хутар округĕ),—чи кая юлнă колхозсенчен пĕри пулнă. Юлашки çулсенче вăл чылай çĕкленчĕ. Халĕ вăл обществăллă хуçалăха вăйлатас тата колхозниксен пурнăçне лайăхлатас çулпа малалла пырать.

Малалла Л. А. Александрова депутат ялхуçалăх министерстви колхозсене ертсе пыма уйăрнă çамрăк кадрсене çителĕксĕр пулăшни çинчен калать. Вăл промышленность предприятийĕсем енчен колхозсене шефа илсе пулăшу парассине вăйлатасси, колхозсем строительство материалĕсем туяна паракан заказсене хăвăртрах пурнăçласси çинчен ыйту хăларса тăратать.

Етĕрне райсовет исполкомĕн председателĕ Кочергина юлташ Чăваш АССР Министрĕсен Советне йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе начар организациленĕшĕн тата вырăнти Советсен исполкомĕсене кулленхи ĕçре çителĕксĕр пулăшса пынăшăн критиклет. Çавăн пекех Ялхуçалăх министерствине механизаторсен кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн критиклет. Вăл ялти суту-илĕве организацилес тĕлĕшпе Суту-илӳ министерствипе Чăвашпотребсоюз ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртать.

М. Г. Арзамасов депутат (Çĕрпӳ районĕнчи Тăвăшкасси округĕ), **М. А. Андреев** депутат (Çĕмĕрле хулинчи Октябрьски округ) тата Первомайски райсовет исполкомĕн председателĕ **Г. И. Савинов** юлташ тухса каланă хыççăн, РСФСР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ **В. А. Маслов** юлташ пысăк сăмах калать.

— Аслă Совет Союзĕнчи тăванла халăхсен çемйинче,—тет вăл,—Чăваш республики вăрçă хыççăнхи çулсенче хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕрен пысăк утăм турĕ.

Министрсен Совечĕн, райисполкомсен, хула Совет исполкомĕсен руководствипе хуçалăх руководителĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулман пулсан, çак çитĕнӳсем тата пысăкрах пулма пултарнă.

Министрсен Совечĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем пуринчен малтан вăл хăйĕн ĕçĕсене КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хушнă пек улăштарса çĕнетес ĕçе ытла та вăраххăн туса пынинчен килнĕ.

Çанталăк условийĕсем лайăх пулни, МТС-сем ялхуçалăх машинисемпе пуянланса пыни, колхозсенче ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулни нумай енлĕ, пысăк тупăшлă ялхуçалăхне аталантарма, пысăк тухăçлă тырпул ӳстерме тата выльăх-чĕрлĕхрен продуктсем нумай илме лайăх майсем туса параççĕ.

Анчах та çакăн пек лайăх условисемпе ытла та çителĕксĕр усă кураççĕ. Республикăри нумай колхозсем пĕчĕк тухăçлă ялхуçалăх культурисем туса илеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ. Колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама ялхуçалăх продукчĕсем тата укçа-тенкĕ сахал уйăраççĕ.

РСФСР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсене тĕрĕслесе тухни çакна кăтартса пачĕ: Министрсен Совечĕ малта пыракан колхозсен опытне сарас ĕçе начар организациленĕ, вĕсен ĕçĕн практикине мĕнпур колхозсен тивлечĕ туса хуман.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ машина-трактор станцийĕсен ĕçне лайăхлатма кирлĕ мерăсем йышăнмасть. Пур пек техникăпа çителĕксĕр усă кураççĕ. Машинăсем çуррине яхăн ĕçсĕр тăрса иртереççĕ. Трактористсен пысăк пайĕ сменăри нормăна тултармасть. Нумай машина-трактор станцисем колхозсем умĕнчи илнĕ обязательствăсене пурнăçламасăр çине ответсăр пăхаççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ колхозсемпе МТС-сенче ĕçлеме специалистсем суйласа илес ĕçе тӳсме çук вăраххăн туса пырать. Министрсен Совечĕн ертсе пыракан работникĕсем, унăн председателĕ тата председателĕн пĕрремĕш заместителĕ çак ыйту тăрăх кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Вĕсене парти ялхуçалăхне ертсе пырас тĕлĕшпе пысăк ĕç шанса панă. Колхозсемпе МТС-сене специалистсем ямалли задание ку таранччен пурнăçламан, колхозсене ĕçлеме янă агрономсемпе зоотехниксенчен пĕр пайĕ колхозсенче сайра хутра кăна пулать, колхозсенче пурăнма кӳçмаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ ку таранччен колхозсенче тивĕçлипе ĕçе тытăнман. Чылай МТС-сенче аслă зоотехниксем, главнăй инженерсем, ветеринари врачĕсем çитмеççĕ. Çавăнпа та Министрсен Совечĕн ертсе пыракан работникĕсем колхозсемпе МТС-сене ĕçлеме янă специалистсем мĕнле ĕçлени çинчен фактсем илсе кăтартма пултараймани тĕлĕнтерсе пулман ĕнтĕ.

Ĕçсем çакăн пек пулни мĕнрен килет? Ĕçсем çакăн пек пулни Министрсен Совечĕпе Ялхуçалăх министерстви çав ĕçе оперативлă ертсе пыманнинчен, эпĕ калăттăм, ялхуçалăх ыйтăвĕсем çине республикăри ертсе пыракан уйрăм работниксем улпутла пăхнинчен килет.

Министрсен Совечĕ ялхуçалăхне ытла та начар ертсе пырать. Райисполкомсемпе МТС-сене тĕрлĕ директивăсем, кăтартусем, телеграммăсем нумай яраççĕ. Анчах ертсе пыракан работниксем колхозсемпе МТС-сенче сахал пулаççĕ. Час-часах вырăнта пулнă чухне татса памалли ыйтусене татса памаççĕ.

Министрсен Совечĕ райисполкомсемпе МТС-сен ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисем тăрăх улăштарса çĕнетес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çĕрулмипе пахча çимĕç туса илес, çуракине хатĕрленес ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртса, Маслов юлташ Суту-илӳ министерствине министра Гавриков юлташа, Чăвашпотребсоюзпа унăн правлени председательне Балашов юлташа суту-илĕве начар организациленĕшĕн критиклет. Маслов юлташ сывлăха сыхлас ĕçе лайăхлатас, мĕнпур совет органĕсен ĕçне КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ тата партипе правительство промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ӳстерес, совет суту-илĕвне лайăхлатас, совет халăхĕн материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă решенисене май улăштарса çĕнетме кирли çинчен калать. Маслов юлташ вăрман хатĕрлемелли плана тултарманшăн «Чувашлес» трестчĕпе райисполкомсен ĕçĕсене хытăн критиклет.

Юлашкинчен Маслов юлташ çапла калать.

— РСФСР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçне çителĕксĕр тесе йышăнчĕ. Çакă тĕрĕс хак пани пулать. Кун пек хак панине кура ĕçе вăйсăрлатма юрамасть, Министрсен Советне, министрсене, Советсен исполкомĕсене, мĕнпур актива ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатса пыма мобилизацилемелле.

РСФСР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен йышăннă постановленире чылай практикăллă кăтартусем пачĕ. Кунсăр пуçне РСФСР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР хуçалăхне малалла аталантармалли ĕçсем çинчен постановлени йышăнчĕ. Çак постановлени тăрăх, 1954 çулта капитальнăй строительство енĕпе пысăк ĕçсем туса иртерме палăртнă. Росси Федерацийĕн правительстви çакăн пек пысăк пулăшу пани республикăри ĕçсыннисен производствăллă активлăхне хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тума çĕклентермелле.

Унтан сесси Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ **И. А. Афанасьев** депутат каланă юлашки сăмаха итлет, сӳтсе явнă ыйту тăрăх постановлени йышăнать. Сесси çавăн пекех Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ йышăннă Указсене çирĕплетесси çинчен — Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председатель заместителĕ **Д. Я. Митьков** депутат тунă доклада итлет тата Указсене çирĕплетет.

Çакăн хыççăн председатель пулса ертсе пыракан **С. М. Ислюков** депутат Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ хупăнни çинчен пĕлтерет.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Коммунизм» колхозра килес çул акăлĕ тырпул туса илме тăрăшса хатĕрленеççĕ. Вăрлăхсене сортланĕ, акма юрăхлă кондицие çитерĕ. Халĕ уя тислĕк кăлараççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): агроном А. Мареева тата колхоз председателĕн заместителĕ Г. А. Андреев сортланă тулă вăрлăхне пăхаççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ

МТС-ăн договора пурнăçламалла

Кăçал пирĕн колхозăн тырпулпа выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ иртнĕ çулхинчен пысăкрах пулчĕ. 1952 çулта гектартан вăтам шутпа 5,86 центнер тĕштырă туса илнĕ пулсан, кăçал 12 центнер туса илтĕмĕр. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те ӳсрĕ. Иртнĕ çулта кашни ĕнерен 645 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал вăтам шутпа 900 литр сĕт суса илетпĕр.

Договор тăрăх, МТС-ăн пирĕн колхоза 130 гектар çуртри акса памаллаччĕ. Колхозра ĕçлеме çирĕплетсе панă бригада пирĕн пата кая юлса пычĕ, пĕтĕмпе те 25 гектар кăна çуртри акса пачĕ. Çакна пула çуракн вăраха тăсăлчĕ. Çакă, паллах, тырпул тухăçлăхне чакарчĕ. Хуçалăхри ытти ĕçсене тăвас тĕлĕшпе те МТС договора пурнăçламарĕ. Комбайнпа 100 гектар вырмалла пулсан, пĕтĕмпе те 37 гектар вырнă. Кĕрхи тырăсене хĕреслĕ майпа акас, кантăр çапас, силослăх утă çулас ĕçсене МТС пачах хутшăнмарĕ. Кĕрхи сĕртме сухи тумалли плана та 72 процент кăна пурнăçланă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пирĕн колхозниксем пысăк хавхаланупа йышăнчĕç. Эпир Пленум решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне палăртрăмăр. Пирĕн колхозниксем çитес çул гектартан вăтам шутпа 15 центнер тĕштырă, 200 центнер çĕрулми туса илес, кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 1 500 литр сĕт суса илес, сысна аминчен 15-шер çура пăхса çитĕнтерес, кашни сурăхран 3,6 килограмм çăм касса илес, выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша 141 пин тенке çитерес задача лартрĕç.

МТС колхозпа тунă договорта палăртнă пур ĕçсене те вăхăтра тата лайăх туса парасан, хамăр умма лартнă задачăна эпир чысăн пурнăçлама пултаратпăр. Анчах пире МТС çителĕксĕр пулăшать. Халĕ хĕрсех çитес çуракине ирттерме хатĕрленмелле. Çак кунсенче пирĕн хире 5 пин лав ытла тислĕк кăлармалла. Сывăтри вăрман пунктĕнчен те кăçал хире нумай тислĕк кăларма палăртнă. МТС директорĕ колхоза çак ĕçре пулăшма пулнăччĕ. Анчах тракторсем халĕ те колхоза килмеççĕ. Çитес çул акма кирлĕ чухлĕ вăрлăх хатĕрлерĕмĕр. Машинăсем çителĕксĕррине пула вĕсене тасатас ĕç те вăраххăн пулса пырать. Ку таранă çитсе те колхоза специалист ярса памаççĕ. Колхозниксен хĕллеки вĕренĕвне йĕркелейместпĕр.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе те МТС пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Çакăн çинчен калаççĕ МТС руководителĕсем. Анчах пулăшăвĕ курăнмасть. Выльăхсене витесене хупса урама тытăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ пулин те МТС-ран пирĕн колхоза никам та килсе курмарĕ. Вăрманта выльăх-чĕрлĕх фермисен çурчĕсене тума хатĕрленĕ 150 кубометр строительство материалĕ выртать. МТС директорĕ вĕсене тракторпа турттарса пама пулнăччĕ. Ĕçе халĕ те тытăнмасть-ха.

В. КОНДРАТЬЕВ.

Етĕрне районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Çуракине хатĕрленеççĕ

МУРКАШ. «Красное Сормово» колхоз çулсеренех çуракине лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илет. Бригадăсенче халĕ уя тислĕк, торф кăлараççĕ, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пуххаççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, вăрлăхсем сортлаççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре уйрăмах А. Воробьева юлташ бригади малта пырать. Вăл уя пин лав ытла тислĕк кăларнă, 86 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 16 центнер кĕл пухнă, вăрлăха пĕтĕмпех сортласа хунă.

Çуракине хатĕрленес ĕçре колхоза МТС пысăк пулăшу парать. Иккĕмĕш трактор бригадинче ĕçлекен П. Иванов тракторист «ДТ-54» тракторпа торф турттарать. Вăл кулленех нормăна ирттерсе тултарать.

Колхозра агротехникăпа зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курс ĕçлет. Вĕренекенсен группине МТС агрономĕ Калинин тата зоотехник Федотова юлташсем ертсе пыраççĕ. Уй-хир бригадирĕсем, звеньевойĕсем 25 çын, обществăлла выльăх-чĕрлĕх пăхаканĕсем 23 çын вĕренеççĕ. Занятисем эрнере пĕр хут—икшун пулаççĕ. Сичшер занятия пулса иртнĕ.

П. АНДРЕЕВ.

Ялхуçалăх специалисчĕсен семинарĕ

КАЛИНИНО. Çак кунсенче колхоз председателĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта «Гвардеец» колхоз председателĕ Е. Воробьев юлташ колхозăн перспективлă планĕпе паллаштарчĕ.

Семинара колхоз председателĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем 67 çын хутшăнчĕç. Вĕсем перспективлă план кашни колхозрах тумаллине палăртрĕç.

Н. КУРЦОВ.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе ĕçлесси

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ социализмла ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене малалла аталантарас ĕçре парторганизацийĕсен рольне ӳстерме хушрĕ. Пуçламăш парторганизацисем ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă, тата пĕччĕр тесен, парти райкомĕсен парторганизаци секретарĕсене вĕрентсе, вĕсен активлăхĕпе пуçарулăхне ӳстерсе пымалла.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсем—парти работникĕсен чи йышлă отрячĕ. Парторганизаци ĕçĕ секретарĕн политикăлла пĕлĕвĕнчен, вăл çынсене ертсе пыма тата воспитани пама пĕлнинчен нумай килет. Парторганизаци секретарĕн тĕнчекурăмĕ анлă, принциплăхĕ çирĕп пулмалла. Унăн коммунистсемпе партире тăман массăсене партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçа кĕртме организацилеме пĕлмелле. Унăн самокритикăна, уйрăмах аялтан килекен критикăна анлă сарассишĕн тăрăшмалла.

КПСС Елчĕк райкомĕ пуçламăш парторганизаци секретарĕсене воспитани парас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Райком парти кадрĕсен идейăлла шайне тата ĕçлĕ квалификацине ӳстерсе пырать. Парторганизаци секретарĕсене пурне те политикăлла вĕренме хăнăхтарнă.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентес ĕçре КПСС райкомĕ ирттерекен семинарсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Семинарсенче эпир парти строительствин ыйтăвĕсене сӳтсе явнипе, практикăллă ыйтусем тăрăх докладсемпе ирттеретпĕр. Кунсăр пуçне семинарсенче пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашаççĕ. Семинарсенче КПСС райкомĕн ертсе пыракан работникĕсем, çавăн пекех пуçламăш парторганизаци секретарĕсем те докладсем туса параççĕ. Тĕслĕхрен, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ирттернĕ ялсенчи парторганизаци секретарĕсен семинарĕнче асăннă колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Железов юлташ ĕç опычĕ çинчен доклад туса пачĕ. Кунсăр пуçне эпир парторганизаци секретарĕсене Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн хуçалăхĕпе паллаштартăмăр.

Эпир семинарсене уйрăм отраслĕсенчи парторганизацисем валли уйрăммăн ирттеретпĕр. Çавăн пек туни нумайрах усă парать. Иртнĕ çулхи сентябрь уйăхĕнчен пуçласа, КПСС райкомĕ колхозсенчи парторганизаци секретарĕсемпе 9 хутчен, шкулсенчи тата учрежденисенчи парторганизаци секретарĕсемпе 2 хутчен семинарсем ирттерчĕ.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене воспитани парас енĕпе эпир ятарласа пухакан семинарсемпе кăна мар, хуçалăхпа тата парти-политикăлла ыйтусем тăрăх ирттерекен канашусемпе те усă куратпăр. [illegible] тата хуçалăх организацийĕсен руководителĕсемпе парторганизаци секретарĕсен пĕрлехи канашăвне те ирттеретпĕр.

Парти пуçламăш организацийĕсене ертсе пырас ĕçре секретарсен отчечĕсене парти комитечĕн ĕçре ларăвĕсене [illegible] сӳтсе явни пысăк вырăн йышăнать. Çакна туни парторганизацисен опытне пĕтĕçтерме, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене часрах пĕтерме май парать. Çулталăк хушшинче КПСС райкомĕн бюровĕ «Пахарь», «Путь Ленина», «Марс» колхозсенчи, районти сыхăну кантурĕнчи тата ытти хăшпĕр пуçламăш парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене — пурĕ 9 отчет сӳтсе яврĕ. КПСС райкомĕн бюровĕ уйрăм ыйтусем тăрăх та пуçламăш парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене сӳтсе явать. Отчетсене сӳтсе явиччен малтан эпир ĕçе вырăна кайса тĕрĕслетпĕр. Ялсенчи парторганизаци ĕçне тĕрлĕ енчен тĕпчесе вĕренес шутпа, сăмахран, КПСС райкомĕн работникĕсемсĕр пуçне ялхуçалăх специалисчĕсене те хутшăнтаратпăр.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене КПСС райкомĕн пленумĕнче сӳтсе явни те чылай усă парать. Иртнĕ çулталăк хушшинче эпир икĕ парторганизаци секретарĕн отчетне пленумра сӳтсе яврăмăр.

Вăл пленумсенче çакăн пек ыйтусем тăнă: «МТС-ри пуçламăш парторганизаци ĕçĕсем çинчен» тата «Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци комсомол организацине мĕнле ертсе пыни çинчен».

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене воспитани парас ĕçре вĕсене уйрăммăн вĕрентни, парти райкомĕсен пуçламăш парторганизацисемпе тачă çыхăну тытни пысăк вырăн йышăнать. Райком работникĕсен ытларах вырăнта пулмалла. Ку тĕлĕшпе инструкторсемпе пропагандистсен пысăк ĕçсем туса тивĕçлĕ.

Анчах та пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вырăнта пулăшас тĕлĕшпе пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур. Инструкторсен пуçламăш парторганизацисенче пулни, час-часах тăрăхра [illegible] вĕсем пуххисем вăхăтă ытларах ирттереççĕ. Чылай парторганизацисем колхозсемпе МТС-сенчи ĕçсем çине кирлĕ пек влияни параймаççĕ.

Халĕ эпир инструкторсене уйрăм колхозсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем секретарьсене тăтăшах вырăнта пулăшаççĕ. КПСС райкомĕ енчен тăтăшах пулăшни парторганизаци секретарĕсене партилле-организацилле тата политикăлла ĕçсене вăйлатма май туса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн районти чылай парторганизацисем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене лайăхрах пурнăçласа пыраççĕ.

Ку тĕлĕшпе Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацие илсе кăтартма пулать. Кунта пурĕ 50 коммунист. Вĕсем пурте колхоз производствинче лайăх ĕçлеççĕ, ĕçкунĕсен минимумне çулсеренех ирттерсе тултараççĕ. Çавăн пекех коммунистсен çемйинчи ĕçлеме пултаракан çынсем те ĕçкунĕсен минимумне тăтăшах тултарса пыраççĕ.

Парторганизаци артелĕн обществăлла хуçалăхне малалла аталантарассишĕн тата колхозниксене коммунизмла воспитани парассишĕн куллен тăрăшать. Колхоз çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Михайловский коммунист ертсе пыракан бригада кăçал кашни гектартан 22-шер центнер тĕштырă туса илчĕ. Колхоз государствăна срокчен тырă парса татрĕ тата 1954 çулхи çуракн валли лайăх вăрлăх хатĕрлерĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те пысăк çитĕнӳсем тунă. Колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те тултарнă. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли кăçалхи валнене пурнăçланă. Кунсăр пуçне 1.500 хур, 30 пин литр сĕт государствăна сутнă. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те ӳссе пырать. Колхоз кăçалхи 9 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 1.923-шер литр сĕт суса илнĕ.

Çак ĕçсенче пуринче те парторганизацин, коммунистсен пуçарулăхĕ уççăн курăнса тăрать. Парторганизаци пĕтĕм ĕçе коллективлăн ертсе пырать. Кунта кăçал 16 хутчен парти пухăвĕсем ирттернĕ, партбюро ларăвĕсем те вăхăтра пулса пыраççĕ.

Елĕкрех кая юлса пынă Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра та ĕçсем лайăхланса пыраççĕ. Пуçламăш парторганизаци кăçал колхоз правленийĕпе пĕрле çынсене производствăн тĕп отраслĕсем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Çапла туни ĕçе лайăхлатма пулăшрĕ. Артель районта малта пыракан колхозсемпе пĕрлех тырă вырса та çапса пĕтерчĕ, государствăна срокчен тырă парса татрĕ, çĕрулмипе техникăлла культурăсене вăхăтра пухса кĕртрĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана мĕнпур выльăхсем енĕпе тултарчĕ, государствăна срокчен выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татрĕ. Халĕ ку колхозра 100 ĕне тата 50 пăру вырнаçмалăх çĕнĕ витесем туса пĕтереççĕ. Артель çуракн валли çителĕклĕ тарап вăрлăх хатĕрлесе хунă.

Парти организацийĕсен артель хуçалăхне ертсе пырас ĕçри организаторла рольне Ленин ячĕпе тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисен опычĕ тăрăх та кăтартма пулать.

Анчах уйрăм колхозсенчи парторганизацисем апăх ĕçлеççĕ-ха. Вĕсем колхоз ĕçĕсене кирлĕ пек ертсе пыраймаççĕ, хăйсен пуçарулăхĕпе пултарулăхне çителĕклĕ кăтартаймаççĕ. Хăшпĕр коммунистсем колхоз производствинче кăтартуллă ĕçлемеççĕ.

Халĕ КПСС райкомĕ асăннă парторганизацисен секретарĕсене партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсене лайăхлатма чылай пулăшу парать.

Калас пулать, районти коммунистсен кĕрешӳри пултарулăхĕ куллен ӳссе пырать. Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕсенче пуçламăш парторганизаци секретарĕсен отчечĕсем тăрăх пухусенче пулнă коммунистсенчен 63 проценчĕ тухса каларĕ. Чапаев ячĕпе тăракан, «Пахарь», «Малалла» колхозсенчи, райпотребсоюзри, Сăрьелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти парторганизацисенче пухусене мĕнпур коммунистсем пынă, вĕсенчен 90 проценчĕ тухса каланă.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем пуçламăш парторганизаци секретарĕсен ĕçри пысăк çитменлĕхĕсене кăтартса пачĕç. Задача çакăн пек пуçламăш парторганизацисен колхозсене организацилле хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес ĕçри пултарулăхне ӳстерсе пымалла. Çак задачăна татса парас ĕçре чи кирлĕ условисенчен пĕри—парторганизаци секретарĕсемпе ĕçлессине лайăхлатни, вĕсене парти организацийĕсен нумай енлĕ пурнăçне ертсе пырас ĕçе вĕрентсе пысăк тăрать.

Халĕ районти ялхуçалăх ĕçченĕсем, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене хавхаланса, килес çуракине лайăх кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Ку вăхăтра пуçламăш парторганизацисен производствăри организаторла ролĕ питçаннинчен те вăйлăрах пулмалла.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсене партин XIX-мĕш съезчĕ тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă историлле решенисене кăсăклăнмаллăхтарса, парти райкомĕ партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсем анлăн çӳлĕрех пулма çăвана уйăрать.

Г. АЛЕКСЕЕВ,

КПСС Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

Министерствӑсем производство нушисене тӗплӗн шута илме тивӗҫ

Халӑха куллен ӳсse пыракан ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес ӗҫре вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗ пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ «Куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларассине ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен» йышӑннӑ постановленире ҫапла каланӑ: «вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн тӗп задачи вӑл халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине хӑвӑрт вайлатасси тата таварсен пахалӑхне лайӑхлатасси пулать», тенӗ. Ку постановленире уйрӑмах халӑх нумай ыйтакан таварсем туса кӑларассине ӳстерме палӑртнӑ.

Етӗрне районӗнчи предприятисем ҫак пысӑк задачӑсене мӗнле пурнӑҫласа пыраҫҫӗ-ха? 10 уйӑхри производство планне, пӗтӗмӗшпе илсен, 103,3 процент тултарнӑ. Районти промкомбинат ҫулталӑкри плана ноябрӗн 15-мӗшӗнче тултарчӗ. Апат-ҫимӗҫ комбиначӗпе сӗт-ҫу завочӗ 11 уйӑхри плана срокчен тултарчӗҫ. Пулӑ тытакан колхоз ҫулталӑкри планран иртерсе 3 тонна пулӑ тытнӑ.

Анчах эпир халӑх ыйтӑвӗсене пурнӗнӗпе те тивӗҫтерсе пыраймастпӑр-ха. Ӗҫсынинсем уйрӑмах сӗтел-пукан нумай ыйтаҫҫӗ. Районта промысла коопераци артелӗсем тӑвакан, вӗсенчен виҫҫӗшӗ йывӑҫран тӗрлӗ япаласем туса кӑлараҫҫӗ. Анчах вӗсем халӗ пите ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Тарпромсоюз системине кӗрекен «Ударник» артель авса тунӑ пукансем, дивансем, пата этажеркӑсем тума пултарать. Апла пулин те, Тарпромсоюз правленийӗ ҫав пите кирлӗ япаласем туса кӑларассине планпа палӑртмасть. «Красный яр» артелӗн ҫулталӑкра катка-пичке 150 пин тенкӗлӗх туса кӑлармалла. Артель ҫак пӗчӗк плана та тултараймасть.

Сӳлерехре асӑннӑ артельсенче ӗҫ условийӗсем пите япӑх. Вӗсен цехӗсем тӗрлӗ ҫӗрте сапаланса пӗтнӗ. «Красный яр» тата Ватутин ячӗпе тӑракан артельсен хӑйсен ҫуртсем ҫук, ҫавна пула вӗсен цехӗсене уйрӑм ҫынсен ҫуртӗсене хваттере вырнаҫтарнӑ. Акӑ мӗнре пулать вӗсем пите ҫителӗксӗр ӗҫлени тӗп сӑлтавӗ. Ҫавӑн пирки ӗнтӗ, паллах, производствӑна механизацилесси тата ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстересси ҫинчен шухӑшлама та май ҫук.

Ҫак ҫитменлӗхе пӗтерес тесен, пирӗн шутпа, пӗчӗк артельсене пӗрлештерсе пысӑклатас пулать. Вара производство процесӗсене механизацилеме тата квалификациллӗ кадрсем ҫителӗклӗ тупма май пулӗ.

Райсовет исполкомӗ промкоопераци артелӗсенче продукци туса кӑларассине 3 миллион тенке, вырӑнти промышленность предприятийӗсенче — 4 миллион тенке ҫитерме палӑртать. Ҫак плана пурнӑҫлас тесе, эпир халӗ кашни предприятире тивӗҫлӗ ӗҫсем туса иртерме палӑртатпӑр. Ку тӗлӗшпе пире Вырӑнти тата топливо промышленность министерствипе Чӑваш промсовет правленийӗ пысӑк пулӑшу пама тивӗҫ. Калас пулать, вӗсем хӑйсене пӑхӑнса тӑракан предприятисене ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ, производство нушисене тӗплӗн шута илмеҫҫӗ, предприятисене чӗртавар, вутӑ, автомашинӑсем кирлӗ чухлӗ уйӑрса памаҫҫӗ.

Вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсем туса кӑларакан продукци пахалӑхне малалла лайӑхлатасси ҫине уйрӑмах тимлӗ пахмалла. Ку тӗлӗшпе пирӗн юлашки вӑхӑтчченех пысӑк ҫитменлӗхсем пулса пынӑ. «Ударник» артельте туса кӑларакан корзинкӑсене районти ӗҫсыннисем туянасшӑн мар, ҫавӑнпа та артель хӑй тӑвакан продукцие урӑх ҫӗре турттарса каять. Промкомбинатра 60 пин тенкӗлӗх тӳме пуҫтарӑннӑ, вӗсене никам та илесшӗн мар. Продукци пахалӑхне лайӑхлатас тӗллевпе вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн предприятийӗсенче ҫӗнӗ техникӑна, малта пыракан технологие анлӑн ӗҫе кӗртмелле, поток меслечӗсемпе ӗҫлессине организацилемелле, конвейерсемпе усӑ курмалла, ҫавӑн пекех государствӑпа кооперации промышленноҫӗнчи малта пыракан предприятисен тата производство новаторӗсен опычӗпе анлӑн усӑ курмалла.

Етӗрнери апат-ҫимӗҫ комбинатӗнче механизациленӗ цех усма палӑртнӑччӗ. Ана валли ҫӗр те уйӑрса панӑ. Анчах Чӑваш АССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви ҫак цеха туса лартма васкамасть.

Сарӑелӗнчи арманта ҫӗнӗ двигатель вырнаҫтарса лартма палӑртса хунӑччӗ. Асӑннӑ министерство айӑпӗпе ҫав двигателе халӗ те вырнаҫтарман.

Куллен кирлӗ таварсем ытларах туса кӑларасси, вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси кадрсене тимлӗн суйласа илнинчен, вӗсене тӗрӗс воспитани панинчен килет. Министерствӑсем ҫак пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫе тивӗҫлипе хакламаҫҫӗ-ха. Сӑмахран, юлашки пилӗк ҫул хушшинче Сарӑелӗнчи арманта 10 директор улшӑннӑ. Пахча ҫимӗҫ хатӗрлесси хӗрсе пынӑ вӑхӑтра апат-ҫимӗҫ комбиначӗн бухгалтерне ӗҫрен кӑларнӑ, унта бухгалтер паянхи кунччен ҫук. Нумай пулмасть Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министрӗ Калинкина юлташ апат-ҫимӗҫ комбиначӗн директорне Сторожук юлташа ӗҫрен кӑларма ыйтса заявлени ҫырса пама хушнӑ.

Чӑваш АССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви кадрсем суйласа илнӗ чухне КПСС райкомӗпе те, райсовет исполкомӗпе те канашласа пӑхмасть. Ку вара кадрсем час-часах улшӑнасси патне илсе пырать.

Сӳлерехре асӑннӑ ҫитменлӗхсене вӑраха ямасӑр пӗтермелле. Унсӑрӑн партипе правительство лартнӑ задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлама май ҫук.

И. ЖЕЛЕЗНОВ.
Райсовет исполком председателӗн заместителӗ.

ӲСӖМ ҪУЛӖ ҪИНЧЕ

«Пионер» колхоз районта малта пыракан колхозсенчен пӗри шутланать. Юлашки 2—3 ҫул хушшинче колхозӑн обществӑлла хуҫалӑхӗ палӑрмалла ҫирӗпленчӗ, тӗштырӑсемпе техникӑлла культурӑсен, тымарҫимӗҫсен тухӑҫлӑхӗ чылай ӳсрӗ, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси те лайӑхланчӗ.

Колхоз членӗсем кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне уйрӑмах ӑнӑҫлӑ вӗҫлерӗҫ. Вӑтам шутпа гектартан 15-шер центнер, 60 гектар ҫинчен вара—гектар пуҫне 19,5-шер центнер ыраш пуҫса кӗртнӗ. «Торедаг» пӑрҫа тухӑҫлӑхӗ пӗр гектар пуҫне 22 центнера ҫитнӗ. В. Ухриков юлташ ертсе пыракан 1-мӗш бригадӑри колхозниксем кашни гектартан 17-шер центнер ҫурхи тулӑ, 22-шер центнер пӑрҫа, 16-шар центнер вир туса илчӗҫ.

Колхоз членӗсем 1954 ҫулта кашни гектартан вӑтам шутпа 19-шар центнертан кая мар тӗштырӑ, 200-шер центнертан кая мар ҫӗрулми туса илме задача лартрӗҫ. Ҫӗр структурине лайӑхлатса пырас майпа колхозра удобренисемпе анлӑн усӑ курма, суха тарӑнлатса тыма тытӑннӑ. Кӑҫал уй-хире 3 пин тонна ытла тислӗк кӑларнӑ пулсан, 1954 ҫулта 4 пин тонна ытла кӑлараҫҫӗ. Минераллӑ удобренисене 1953 ҫул валли пурӗ те 28 тонна ҫеҫ кӳрсе килнӗ, ҫитес ҫул валли ӑна 100 тоннӑран кая мар кӳрсе килмелле. Колхозӑн торф запасӗ пысӑк. Халӗ колхозниксем торф кӑлараҫҫӗ. Малтанлӑха 93 гектар ҫинчи ҫӗр участокӗ ҫине пӗтӗмпех торф кӑларма палӑртнӑ. Кӑҫал И. Тихонов ертсе пыракан 8-мӗш трактор бригади ҫурхине акмалли пӗтӗм лаптӑка кӗрхи ҫӗртме туса хӑварчӗ. Калас пулать, механизаторсем ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсен пысӑк пайне машинӑсемпе туса пачӗҫ. Авӑн ҫапас, силос хывас ӗҫсене те пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех машинӑсемпе тунӑ.

1952 ҫулта кантӑрпа йӗтӗнрен 195 пин тенкӗ ытла тупӑш илнӗ. Кӑҫал кашни гектартан вӑтам шутпа 6,5 центнер йӗтӗн вӑрри, 6 центнер йӗтӗн сӳсӗ, 8 центнер кантӑр вӑрри, 6 центнер кантӑр сӳсӗ туса илнӗ. Кантӑрпа йӗтӗн продукцийӗ 400 пин тенкӗрен кая мар тупӑш парать. 1954 ҫулта колхоз йӗтӗнпе кантӑра 40 гектартан кая мар акать, унтан илекен тупӑша 500 пин тенке ҫитерме палӑртнӑ.

Кӑҫалхи 10 уйӑх хушшинче кашни сӑвакан ӗнерен вӑтам шутпа 1.298-шар литр сӗт суса илнӗ. Район Совечӗн депутачӗ Б. Соколова дояркӑ хӑйне ҫирӗплетсе панӑ кашни ӗнерен 1.523-шер литр, унпа ӑмӑртакан П. Матюшкина дояркӑ 1.486-шар литр сӗт суса илнӗ. Колхоз выльӑх-чӗрлӗхрен 100 пин тенкӗ тупӑш илнӗ. Государствӑна сӗт сутса тепӗр грузовой автомашина туяннӑ.

Выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ ӳссе пыни колхозра выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫе тимлӗн туса пынинчен нумай килет. «Пионер» колхоз тымарҫимӗҫ туса илес тӗлӗшпе ҫак икӗ ҫул хушшинче пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Пӗлтӗр кашни гектартан 800-шер центнер выльӑх кӑшманӗ, 500-шер центнер турнепс, кӑҫал кашни гектартан 850-шар центнер выльӑх кӑшманӗ илнӗ. 1954 ҫулта кашни гектартан 900 центнертан кая мар выльӑх кӑшманӗ туса илме задача лартнӑ.

Колхоз 1954—1955 ҫулсенче выльӑхсем валли апат нумай хатӗрлессишӗн, колхозниксем валли те выльӑх апачӗ валеҫсе памалла тӑвассишӗн кӗрешет. Колхозӑн утӑ ҫулса илмелли ҫарансем 92,5 гектар шутланаҫҫӗ. Кӑҫал выльӑхсем валли ҫӗршер центнер пахал ҫаран ути тата клевер ути хатӗрленӗ.

Юлашки ҫулсенче ҫаран ути тухӑҫлӑхӗ чакса пыни палӑрма пуҫланӑ. Ҫавӑнпа та ҫаран҃сене лайӑхлатас тӗлӗшпе ҫитес ҫулах чылай ӗҫсем тума палӑртнӑ. Ҫитес ҫуркунне 12 гектар ҫарана пӑтта йӗтӗн акаҫҫӗ. 1955 ҫулта ҫав участок ҫине сӗлӗпе клевер хутӑш акаҫҫӗ.

Кӑҫал колхозниксене кашни ӗҫкунӗ пуҫне 4 килограмм ялӑн тӗштырӑ валеҫсе панӑ. Иртнӗ ҫул колхоз членӗсем ӗҫкунӗ пуҫне 1 тенкӗ те 50-шар пус укҫа илнӗ пулсан, кӑҫал 3 тенкӗ ҫуралан кая мар илеҫҫӗ. Ака А. Рейнов бригадирӑн ҫемйи 1.250 ӗҫкунӗ тунӑ. Вӑл 300 пӑт тырӑ тата 4.375 тенкӗ укҫа илет. К. Соколова дояркӑ пӗччен ӗҫлесе 450 ӗҫкунӗ тунӑ, вӑл 108 пӑт тырӑ 1.575 тенкӗ укҫа илет. 80 ҫула ҫывхарнӑ Максим Рейнов колхозра тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе 100 ӗҫкунӗ ытла тунӑ. Вӑл ӗҫкунӗсем тӑрӑх 24 пӑт тырӑ, 350 тенкӗ ытла укҫа илет. Колхоз правленийӗ кӑҫал 6 колхозника пару, 65 хуҫалӑха сурӑхсем, 56 хуҫалӑха сысна ҫурисем туянтарнӑ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗпе тӗплӗн паллашнӑ хыҫҫӑн, колхозра усӑ курман резервсем чылай пуррине туйса илчӗҫ, ҫав резервсене ҫитес ик-виҫӗ ҫул хушшинче ӗҫе кӗртме палӑртрӗҫ.

Ҫитес ҫуркунне 1.5 гектар ҫинче сад тума палӑртнӑ. Ҫитес ҫуркунне лартма улмуҫҫисем илсе хунӑ.

«Пионер» колхоз вӑрҫӑччен те, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче те пахча ҫимӗҫ тӑвас тӗлӗшпе палӑрса тӑнӑ. Пала шывӗ хӗрринчи участок ҫинче ватӑ колхозник-пахчаҫӑ Леонтий Прискин ертсе пынипе пысӑк тухӑҫлӑ хӑяр, кишӗр, купӑста, помидор, сухан ҫитӗнтерӗ.

Колхозра хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫе те лайӑхлатма тытӑннӑ.

1954—1955 ҫулсенче колхозниксен килӗсене электричество тата радио кӗртме, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх фермӗнчи йывӑр ӗҫсене механизацилесе ҫитерме палӑртнӑ.

Кӑҫал колхозра библиотека уҫнӑ, унта 1.000 кӗнекене яланах шутланать. Кашни колхозник килне тенӗ пекех хаҫат-журналсем килсе тӑраҫҫӗ.

Ҫапла ӗҫлеҫҫӗ, ҫапла пурӑнаҫҫӗ «Пионер» колхоз ҫыннисем. Вӗсем малашнехи тата ырӑрах пурнӑҫшӑн вӑя шеллемесӗр кӗрешеҫҫӗ.

А. ТУКМАКОВ.
Первомайски районӗ.

Кунта пысӑк сад пулать

Ҫулталӑк каялла, 1952 ҫулхи октябрь вӗҫӗнче, пӗр каҫхине, Буденный ячӗпе тӑракан колхозрӑ партбюро ларӑвӗ пынӑ. Бюро членӗсем умӗнче, сарлака сӗтел ҫинче, колхоз ҫӗрӗн планӗ-картти выртнӑ. Бюро членӗсем колхоз членӗ Иван Андреевич Андреев пысӑк сад тӑвас пирки панӑ сӗнӗве сӳтсе явнӑ, картӑ ҫинче пулас садӑн вырӑнне шыранӑ.

— Ҫакӑн пек пысӑк сад тӑвас шухӑш манӑн тахҫанах пурччӗ. Анчах, колхозсем пӗчӗккӗ чухне, эпӗ вӑл сӑмаха тапратма та шутӑшламан. Халӗ ӗнтӗ, колхоза пысӑклатнӑ хыҫҫӑн, ҫак ыйтӑва тапратма та юрать. Эпӗ сӗнӳ кӑна мар, хамӑн сӑмаха та паратӑп: эсир мана шанатӑр пулсан, ҫак ӗҫе эпӗ хам ҫине илетӗп. Эпӗ партире тамастӑп, коммунист мар, анчах пелетӗп: пуҫламӑш парторганизаци ҫак пуҫарӑва хӑй ҫине илсен, мана ӗҫре куллен пулӑшса пырсан, эпир кунта паян калаҫни тепӗр 2—3 ҫултан пӗтӗмпех пурнӑҫа кере,—тесе тупа тунӑ Иван Андреев партбюро членӗсем умӗнче.

— Юре,—тенӗ нумай вӑхӑт хушши сӳтсе явна хыҫҫӑн партбюро членӗсем.— Пӗтӗм кӑмӑлпа тав тӑватпӑр сире, Иван Андреевич, ҫакӑн пек пысӑк пуҫарӑва хавар ҫине илме кӑмӑл тунӑшӑн. Йышӑнапӑр, пулӑшапӑр.

Картта ҫинче палла туса, сад валли 10 гектар ҫӗр лаптӑкӗ уйӑрнӑ.

Колхозӑн кантӑрти чиккинче, Муркаш районӗнчи «Ҫӗрон» тата Ленин ячӗпе тӑракан колхозсен чиккисем пӗрлешнӗ тӗлте, ҫамрӑк вӑрман ешӗрет. Вӑрман тӑрӑх, Моргаушка текен юханшывӑн икӗ айккипе сарӑлса выртакан улӑхран пуҫланса, симӗс ҫеремлӗ вар тӑсӑлса выртать. Пирӗн патӑрта ӑна Вӑрӑм вар теҫҫӗ. Ҫак варӑн тури вӗҫӗ Буденный ячӗпе тӑракан колхоз ҫӗрӗ ҫине тухать. Ятарласа тунӑ пекех, вӑл пӗр вырӑнта пӳлмекленсе анкарланать те, каллех сарӑлса каять.

— Урӑх ниҫта та мар, ҫакӑнтах пулмалла пирӗн сад. — татӑклӑн йышӑннӑ партбюро. Ҫакӑнпа колхоз председателӗ П. Ильин юлташ та килӗшнӗ.

— Ку пӳлмекре пӗве пӗвелес те, пӗвери шывпа йывӑҫсене шӑварма кӑна мар, пулӑ ӗрчетме те усӑ курма пулать,—тенӗ колхоз председателӗ.

Сӗнӗве ырлавӑ, йышӑннӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн коммунистсем колхозниксем хушшинче ӑнлантару ӗҫӗ пуҫарса янӑ. Юлашкинчен ҫак сӗнӗве колхоз правленийӗ те, колхоз членӗсен пухӑвӗ те йышӑннӑ. Колхоз правленийӗпе ВЛКСМ комитечӗ, колхозра тӑрӑшса ӗҫлекен ҫамрӑк хӗрачасене суйласа илсе, садра ӗҫлеме 8 ҫынтан яланлӑх звено туса хунӑ. Ӑна ертсе пыма ял Совечӗн чи активлӑ депутачӗсенчен пӗрне, сад ӗҫне чӗререн юратакан Василий Иванович Иванов юлташа хушнӑ.

• • •

Колхоз уйӗсем, хӗллехи хулӑн юр айӗнчен тухса, кӑшт типме пуҫласанах пулас сад вырӑнӗнче хӗрӳллӗ ӗҫ пуҫланнӑ. Сад вырӑнӗнче халӗ нимех те пулман-ха. Вӑрӑм варӑн пӗр енӗпе юр айӗнчен тухнӑ симӗс калча ӳснӗ, тепӗр енӗпе—кӗркунне сухаласа хӑварнӑ хура уй лаптӑкӗсене сӑрхӑнса юхнӑ ҫурхи шыв кӳллентсе выртнӑ.

— Чӑнах пулӗ-ши кунта мӗн те пулин?—иккӗленнӗ хӑшпӗрисем, пулас сад тавра вӑрман лартма тухнӑ колхозниксем.—Акӑ ҫава тухрӑмӑр. Ҫитес кунсенчех колхоз уй-хирӗсенче хӗрӳллӗ ӗҫсем пуҫланӗҫ. Ҫакӑн пек пысӑк лаптӑкӑн сӑн-сӑпатне пӗр ҫу хушшинче улӑштарма сахал мар вӑй кирлӗ вӗт.

Вӑрман лартнӑ ҫӗре колхоз правленийӗпе партбюро членӗсем те хутшӑннӑ. Вӗсем вӑрман лартакансем хушшинче пулас сад ҫинчен калаҫусем ирттернӗ, ӗнтӗмелле каланӑ витӗмлӗ сӑмахсемпе вӗсене ӗҫре хавхалантарса пынӑ. Колхозниксем вара И. Андреевпа В. Иванов юлташсем ертсе пынипе, сад тума палӑртнӑ лаптӑк тавра 7—8 кун хушшинче 2 пин метр тӑршшӗ пилӗк ярӑмлӑ вӑрман лартса тунӑ. Унта пӗтӗмпе 10 пин ытла тӗрлӗ йывӑҫсем лартнӑ.

Ҫакӑ колхозра пысӑк сад тӑвас ӗҫ пӑнах пуҫланнине пӗлтернӗ, ку тӗлӗшпе тума малтанхи утӑм пулнӑ.

Ҫӗр типсе ҫитсен, купалана тӑпра ӗҫса хуна вырӑнта тытӑнса тӑма пуҫласан, Вӑрӑм варта татах тепӗр пысӑк ӗҫ пуҫланна. Халӗ ӗнтӗ кунта, вӑрман лартнӑ чухнехи пек 20—30 ҫын мар, куллен 100—120 ҫын ӗҫленӗ. Вӗсем пысӑк пӗве тума тытӑннӑ.

— Акӑ мӗнле пулмалла пирӗн пӗве,—ӑнлантарнӑ колхозниксене И. Андреев юлташ.— Пӗвелесе пӗтерсен, унӑн сарлакӑшӗ 5 метр, сарлакӑшӗ 13 метр пулать. Тулса ҫитсен вӑл 6 пин тӑваткал метр йышӑнать. Сад лартна йывӑҫсене ҫулахи шӑрӑх кунсенче шӑварса тӑма шыв ытлашшипех ҫитет. Колхоз правленийӗ тата ку пӗвере килес ҫултан пуҫласа, пулӑ ӗрчетме шутлать.

Пилӗк-ултӑ кун ӗҫленӗ хыҫҫӑн пӗве туса пӗтернӗ, майӗпе пулин те, кӳс умӗнчех пӗвене шыв тума пуҫланӑ.

• • •

Ҫу кунӗсем. Кашни кунах Вӑрӑм варӗнче хавасла юрӑ шӑранни илтӗнет. Ҫамрӑк хӗрачасен звени пулас садӑн вырӑнне хатӗрлет. Таисия Замятина, Лидия Яковлева, Нина Семенова, Манефа Евдокимова, Фаина Суркая, Фаина Афанасьева, Роза Кольцова, Манефа Смирнова— вӗсем пурте колхоз саманинче ҫуралса ӳснӗ ҫамрӑк хӗрсем. Вӗсем хӑйсем тунӑ ӗҫпе хӑйсем хавхаланаҫҫӗ, пӗр ӗҫе лайӑх туна пулсан, тепӗр ӗҫе татах лайӑх тума тӑрӑшаҫҫӗ.

Ҫак звено кӗркунне ҫитиччен сад вырӑнне пӗтӗмпех хатӗрлесе ҫитерӗ. Пурӗ унта 2.650 шӑтӑк чавса хатӗрленӗ, 1.6 гектар ҫинче ҫырла йывӑҫҫисен вырӑнне капкалатса хунӑ.

— Ай-уй! Кам алли тума ӗлкӗрнӗ пулӗ кусене?—тӗлӗннӗ «Сад эрни» вӑхӑтӗнче сада улма йывӑҫҫисем лартма тухнӑ колхозницӑсем.

10 гектарлӑ лаптӑк ҫинче, хут ҫине линейка хурса кӑранташпа туртса тухнӑ пек, тӳп-тӳрӗ йӗрсем тӑсӑлса выртаҫҫӗ. Шахмӑтласа чавса тухнӑ шӑтӑксене кашнинех пӗр виҫеллӗ патаксем лартса тухнӑ. Кирек хӑш енчен пӑхсан та вӗсем пӗр йӗр ҫинче курӑнаҫҫӗ.

10 кун хушши пынӑ садра йывӑҫсем лартас ӗҫ «Сад эрнинче» колхоз пӗтӗмпе 1.320 улма йывӑҫҫи, 415 тӗп слива, 900 тӗп чей ҫырли лартса хӑварнӑ. Кунсӑр пуҫне тата 3.000 тӗп хӑмла ҫырли, 800 тӗп хурлӑхан, 800 тӗп крыжовник лартса хӑварнӑ.

• • •

Нумаях пулмасть партбюропа колхоз правленийӗн пӗрлехи ларӑвӗ пулса иртрӗ. Бюропа правлени, КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ постановлене сӳтсе явнӑ май, ҫапла йышӑнчӗҫ: колхозӑн обществӑлла хуҫалӑхне ӳстерме кӑҫал пуҫласа янӑ сада татах сарас. Ҫак сад 1954 ҫулта 13 гектар чухлӗ, 1955 ҫулта татах тепӗр 13 гектар чухлӗ сарӑлмалла. Ҫапла вара сад ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑх вӗҫленнӗ тӗле пӗтӗмпе 40 гектара ҫити сарӑлать.

Р. МАЛЮТИН.
Иншей районӗ.

Ҫулталӑкри плана иртерсе тултарнӑ

Республикӑри полиграфи промышленноҫӗнче ӗҫлекенсем хушшинче производство планне ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлассишӗн социализмла ӑмӑрту анлӑ сарӑлнӑ. Ӑмӑртса ӗҫленипе декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 13 типографи ҫулталӑкри плана пурнӑҫа кӗртнӗ, ҫав шутран Вӑрнарти типографи плана 149 процент, Пӗнерҫри—133 процент, Ишлейри—125,3 процент, Ҫӗрпӳри—118 процент тултарнӑ.

Ноябрь уйӑхӗнчи плана районти типографисем 112 процент, республикӑна пӑхӑнса тӑракан типографисем 106,1 процент пурнӑҫланӑ.

Социализмла ӑмӑрту итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш АССР Культура министерстви малта пыракан типографи коллективӗсене тав тунӑ.

МТС ҫӗнӗ техникӑпа пуянланать

ЧУРАЧӐК. Кунти МТС-а икӗ ҫул каялла организациленӗ. Халӗ унӑн утмӑл ытла трактор, ҫирӗм пилӗк комбайн, вунӑ автомашина тата ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх машинисем пур.

Кӑҫал «ДТ-54» маркӑллӑ виҫӗ трактор, тарӑнлатса сухаламалли плугсем иккӗ, ултӑ культиватор, 11 сеялка тата ытти тӗрлӗ ҫӗнӗ машинӑсем нумай илсе килнӗ. Ҫавна май ҫитес ҫул МТС ялхуҫалӑхӗнчи чылай ытларах ӗҫ тума палӑртнӑ.

МТС-ӑн автопаркӗ ӳсех пырать. Иртнӗ уйӑхра кусса ҫӳрекен мастерской, автосамосвал тата икӗ прицеп илсе килнӗ. Хӑма ҫурмалли станока ӗҫе яни строительство ӗҫӗнче чылай пулӑшать.

Ҫак кунсенче «Сталинец-6» маркӑллӑ пилӗк комбайн килсе ҫитрӗҫ.

И. КОНДРАТЬЕВ.

Матӗрне инке пӗччен мар

КАЛАВ

...Яланхи пекех, Матӗрне инке паян пите ир вӑранчӗ. Тул та ҫутӑлманччӗ-ха ун чух, кӑштах кӑвак ҫутӑ ҫапма пуҫланӑччӗ ҫеҫ. Халех тӑрса нимех те тӑвас ҫуккипе, вӑл тепӗр ыйӑ ҫывӑрса илме шутларӗ, чиллайччен куҫӗсене хупса выртрӗ, анчах та тек ҫывӑрасси пулаймарӗ унӑн—ыйхи ярах уҫӑлса кайрӗ.

Унӑн пуҫне шухӑш хыҫҫӑн шухӑш пырса кӗме пуҫларӗ. Ӗнер ял ҫыннисем васкасах авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ. Халӑхпа пӗрле Матӗрне инке те тӗттӗм пуличченех итем ҫинче ӗҫлерӗ. Паян акӑ унӑн ик-виҫӗ ҫамрӑкпа пӗрле хулана, пахча ҫимӗҫсем сутма каймалла. Бригадир ҫапла хушрӗ.

— Кил пӑхма-калах Крахвине кинемее чӗнес пуль,—шухӑшларӗ Матӗрне инке.— Вӑхӑчӗ пулсан...

Крахвине кинемей—ҫитмӗлелле ҫитнӗ, шап-шур ҫӳҫ-пуҫлӑ, анчах ҫапах та самаях ҫирӗп, вашават карчӑк. Ватӑ пулсан та, колхозра хӑйне валли яланах ӗҫ тупать, ӗҫре ҫамрӑксене вӗрентет, унтакунта вӗркесӗрлӗх курсан—чӑтма пултараймасть, ятлать, вӑрҫать. Вӑл ҫеҫ те мар-ха: Крахвине кинемей пӗр пухурах та юлмасть. Халхи витӗрех илтмен пирки чи малта пырса ларать те, ҫынсем мӗн каласшине пӗр сиктермесӗр итлет, тепӗр чух хӑй те тӑрса сӑмах калать. Пӗр кивӗ йӑла кӑна пур унӑн: тӗлӗксене пите ӗненет те, вӗсем ҫинчен каласа пама юратать...

Матӗрнепе Крахвине, ырӑ кӳршисем пулса, пите килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ, кирлӗ пулсан яланах пӗр-пӗрне пулӑшаҫҫӗ. Сасартӑк Матӗрне инкен кинӗ тӑлӑпе колхоз груповике кӗмсӗртетсе иртсе кайрӗ.

— Уй, ара, ыӗртӑн-иҫ!—терӗ те Матӗрне, кашни сассине итлсен, васкасах тухмала тытӑнчӗ.—Таварне тиеме сиклакайрӗ пулӗ-ха ку Мишша, часрах кайсӑ пулӑшас. Сула вӑй Крахвинене каласа тухас...

Темиҫе минутран вӑл урама тухса ҫӳхалса утрӗ. Хӑвса тухӑҫӗ хӗрелме пуҫланӑ ӗнтӗ, ҫантӑлӑкӗ паян уяр, пите лайӑх пулас пек. Ҫапах та сивӗрех, кӗр ҫывхарни сисӗнет.

Матӗрне инке—аллӑ ҫул енмелле сулланнӑ хӗрарӑм. Сӑнран пӑхсан, ӑна унтан та ытларах пама пулать. Питҫӑмартисем пӗркеленнӗ, тӑнлавӗсем кӑвакарма пуҫланӑ, сенкер куҫӗсем кӑна таса та ҫутӑ, ҫамрӑк чухнехи пекех кӑмӑллӑн пӑхаҫҫӗ.

Унӑн упӑшки те, пӗртен-пӗр ывӑлӗ те вӑрҫӑра вилнӗ. Ҫак пысӑк хуйӑха вӑл пите йывӑррӑн чӑтса ирттерчӗ. Темиҫе кун хушши ӑша пӗр тӗпренчӗк ямарӗ, чӗптӗм куҫ хупмарӗ, чирлесех кайрӗ... Ҫавӑн чух вара ӑна Крахвине кинемей пите пулӑшрӗ, ӑша та ырӑ сӑмахсемпе лӑплантарчӗ, йӑпатрӗ.

— Санӑн ҫеҫ мар халь ун пек хуйӑх, пурин те пур... Акӑ, эпӗ те кӗрӳве сухатрӑм, мӑнукӑмсем тӑлӑха юлчӗҫ. Мӗн тӑвас-ха? Вӗсем хӑйсен пурнӑҫӗсене пирӗн пурнӑҫшӑн пачӗҫ, пӗтӗм халӑх телейӗшӗн, ачамӑрсемшӗн... Халӑхпа пӗрле тӳссе ирттерӗпӗр ӗнтӗ мӗнле те пулин. Патшалӑхӗ те хамӑрӑн, пире пӑрахас ҫук...

Матӗрне инке хӑпӑнкаларӗ вара. Анчах ҫапах та пӗччен пурнӑҫ пите йӗчемҫе вӑл! Ир тӑрсан та, каҫхине ӗҫрен таврӑнсан та никампа сӑмах уҫса сӑмах хушма ҫук. Шӑртре те, тулта та шӑпах. Шӑртри япаласем те, пӳрт стенисенчи кашни пӗрене те ҫав тери салхуланса тӗлӗрнӗ пек туйӑнать тепӗр чух. Колхоза ӗҫе тухсан, халӑх хушшинче пулсан кӑна кичемлӗх иртсе каять. Ҫавӑнпах та-и тен, колхозра вӑл нихҫан та пӗр ӗҫрен те юлмасть...

— Мӗн пите тӑрӑшатӑн? Сана, пӗччен ҫынна, нумай кирлӗ-им?—теҫҫӗ ӑна хӑш чух.

— Килте мӗн туса ларас-ха мана! Ӗҫлемесен ӑнран кантӑн эпӗ,—тет вӗсене хирӗҫ Матӗрне инке...

Тепӗр кунне Матӗрнене калах тем ҫитмен пек туйӑнса кайрӗ. Ҫавӑнпа та вӑл ирхине ирех бригадир патне кайса хӑйне ӑҫта та пулин ӗҫе яма ыйтрӗ:

— Килте лараймантӑп эпӗ!

Ҫапла пурӑнса ирттерет хӑйӗн пурнӑҫне Матӗрне инке. Тепӗр чух апат ҫиме те манса каять.

Пӗррe, ирхине, ун пӳрчӗ тӗлӗнче темле ҫынсем чарӑнса тӑчӗҫ, тем ҫинчен шавласах калаҫрӗҫ. Унтан пӗри:

— Матӗрне инке, тух-ха хӑвартрах!—тесе кӑшкӑрчӗ.

— Уй, васпати, мӗн пулнӑ-ши тата?—хӑраса урама чупса тухрӗ вӑл.

— Радио лартса парас тетпӗр сана, сӗрӗн-кунӗн итлемелле пултӑр,— терӗ ӑна Симук бригадир, иртнӗ ҫулта кӑна ҫартан таврӑннӑскер.— Юрать-и?

— Мана, пӗччен ҫынна, мӗн радийӗ?—тӗлӗнчӗ Матӗрне.— Хатӗрӗсене те сая ан ярӑр маншӑн, ыттисене лартса парӑр...

— Эпир пурне те лартса паратпӑр. Сана вара пуринчен те ытларах кирлӗ, тесе шутлатпӑр, пӗччен ҫыншӑн вӑл лайӑх юлташ пекех пулӗ,— терӗ ӑна хирӗҫ бригадир.

Тепӗр икӗ кунтан пӗтӗм ялӗпе радио кӗрлеме тытӑнчӗ. Пурне те хӗпӗртеттерчӗ вӑл. Ара, хӗпӗртемесӗр! Халь вӗт пурте, хулари пекех, радио итлеҫҫӗ, тӗнчере мӗн-мӗн пулса иртнине ҫийӗнчех пӗлеҫҫӗ.

Акӑ, Матӗрне инке пӳртӗнче чӑвашла юрӑсем янраҫҫӗ. Ҫав тери сӗлӗн юрлаҫҫӗ-ҫке юррисене! Вӗсене итленӗ май, Матӗрне хавасланса пырать. Унӑн тата ытларах ӗҫлес килет, пӗтӗм колхозӗпе тата лайӑхрах пурӑнас килет... Ҫук, вӑл пӗччен мар иккен. Вӑл халь пӗтӗм совет ҫыннисемпе пӗрле, вӗсемпе пӗр пек шухӑшпа, пӗр кӑмӑлпа пурӑнать, пӗр сывлӑшпа сывлать...

Радио юрлама чарӑнсанах, ун патне Крахвине кинемей хӑй тӗлӗн темскер хӑпартатса пырса кӗчӗ.

— Мӗн тери ырӑх, э! Кун пеккине тӗлӗкре те курман вӗт эпир,—терӗ вӑл хавасӑн, репродуктор ҫине пӑхса.

— Бурман ҫав,— килӗшрӗ Матӗрне инке.— Халь тем те шухӑшласа кӑларӗҫ, тем те тӑвӗҫ...

Крахвине кинемей кукӑр чӑпӑклӑ чӗлӗмне чӗртсе ячӗ те:

— Эх, тепӗр хут ҫамрӑкланӑттӑм!—терӗ...

• • •

«Йӗпе ҫине сапа», тенӗ ӗлӗк ваттисем. Пурнӑҫра инкек-синкек пулсан. Халь вара пачах урӑхла каламалла: телей ҫине телей, ырлӑх ҫине ырлӑх. Пурнӑҫӗ ҫавӑн пек, яланах ҫынсене хӗпӗртеттермелӗнсем пулса пыраҫҫӗ...

Паян ирхине радио яланхи пекех кӑмӑллӑ, хулӑм сасӑпа калаҫрӗ. Диктор ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли майсем ҫинчен вуласа пачӗ. Ӑна кашни килтех, кашни пӳртрех шӑп пулса, пӗр сӑмахне те сиктермесӗр итлерӗҫ.

— Социализмла ялхуҫалӑхне малалла аталантарассин тӗп тӗллевӗ вӑл—халӑх пурнӑҫне пур енчен те лайӑхлатасси пулать,—терӗ радио. Ҫак ырӑ сӑмахсем пурин чӗрине те ҫирӗппӗн кӗрсе ларчӗҫ, пурин кӑмӑлне те ҫӗклентерчӗҫ... Кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн клубра митинг пулса иртрӗ, ҫынсем партипе правительство ялхуҫалӑхӗ пирки йышӑннисене пурнӑҫа малашне тата та ҫӑмӑллатасси, ҫӗклентерсе ярасси ҫинчен, малашне татах та тӑрӑшсарах ӗҫлеме кирли ҫинчен калаҫрӗҫ.

— Такамшӑн мар, хамӑршӑн ӗҫлетпӗр вӗт, хамӑр ырлӑхшӑн!

Колхозӑн ӗҫсем нумай пулӗ-ха: ҫӗрулми кӑларса пӗтермелле, ӗнесем валли ҫӗнӗ вите туса ҫитермелле...

Халӑхпа пӗрле Матӗрне инке те ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлерӗ.

Пӗррехинче, ирхине ирех, ӗҫе тухса кайиччен, вӑл васкасах шыв ӑсма кайрӗ. Сӑл умӗнче вис-тӑват хӗрарӑм пухӑннӑ та, тем ҫинчен калаҫаҫҫӗ.

— Мӗн пирки пуплетӗр ара кун пекех?—тесе ыйтрӗ Матӗрне, вӗсем патне пырса тӑрсан.

— Пирӗн яла ҫӗнӗ ҫынсем килнӗ-ҫке-ха,—терӗ пӗри.

— Мӗнле ҫынсем-тата?

— Пирӗн, арӑнпе упӑшки. Шӑри агроном, тепри ветеринар, выльӑхсене пӑхма вӗрентекенни, тет. Эппин тӗкки, вӗсене пире ӗҫре пулӑшса пыма янӑ, тет... Кунта пурӑнмаллах янӑ.

— Пах-ха тата! Вӗрентме иккен!

— Ҫапла ҫав. Эп хам куҫпах куртӑм вӗсене... Каҫхине правление кайсаттӑм та. Ачи те пур,—терӗ тепӗр хӗрарӑмӗ.— Пи-итӗ кӑмӑла каймалла ҫынсем пек туйӑнчӗҫ мана...

— Ӑҫта пурӑнаҫҫӗ вара вӗсем?—ыйтрӗ Матӗрне инке.

— Халлӗхе пӗр-пӗр ҫын патне хваттере вырнаҫтарас пек калаҫрӗҫ. Хамӑрӑн йыш сахалтарах пулсан хам патах илӗттӗм эп вӗсене, анчах йышӗ пысӑкрах пирӗн...

— Акӑ, Матӗрнен никам та ҫук, унӑн чӗнсе каймалла ҫеҫ,—терӗ виҫҫӗмӗшӗ.

— Чӑнах! Хӑвна та пулӑшкалӗччӗҫ вӗсем.

— Эп хирӗҫ мар та... хӑйсем килӗшӗҫ-ши? Хулари ҫынсем-ҫке вӗсем, тиркеме пултараҫҫӗ...—терӗ ҫакна хирӗҫ Матӗрне инке, шухӑшласа тӑнӑ хыҫҫӑн.

— Ма килӗшмеҫҫӗ пуль? Ӑҫта та пулин пурӑнмаллах ӗнтӗ вӗсен. Эс таса пурӑнатӑн, кансӗрлекен ҫук санӑн...

Киле таврӑннӑ чух Матӗрне Крахвине патне кӗрсе каласа тухрӗ.

— И-и, чунӑм, нимӗн те шухӑшласа ан тӑр, кай та—чӗн! Ҫитӗ сана упа пек пӗччен пурӑнма,—терӗ лешӗ, Матӗрне хӑй мӗн шут тунине каласа парсан.—Шутсӑр лайӑх пулать ку! Вӗреннӗ ҫынсемпе пурӑнни мӗнрен начар пултӑр!

— Хам та ҫавна калатӑп ҫав...

Витрисене киле ҫитсе лартсанах, Матӗрне правление кайрӗ.

— Иван Ильич кунта-ши?—ыйтрӗ вӑл алӑк патӗнче тӗлӗрсе ларакан дежурнӑйран.

— Кунтах, кунтах, кӗр, Матӗрне инке!—илтӗнчӗ пӗчӗк пӳлӗмрен председатель сасси. Ӑна вӑл чӳречерен курса юлнӑ пулмалла.

Матӗрне инке ун пӳлӗмне кӗнӗ те, хулӑн кӑна ӳсӗрсе пукан хӗррине ларчӗ.

— Пӗр ӗҫ пирки килтӗм те-ха... Каласа пӑхасшӑнччӗ... Те вырӑнлӑ шухӑш ӗнтӗ ман сӑмах...

— Кала, кала, ан иméн,—терӗ председатель, ун ҫине тӳррӗн пӑхса.

— Пирӗн колхоза ҫӗнӗ ҫынсем килнӗ тенине илтрӗм те...

— Тӗрӗс, килнӗ. Пире пулӑшса пурӑнма килнӗ.

— Ӑҫта урас тетӗр эсир вӗсене? Ман патӑма пымӗҫ-ши? Вырӑнӗ ҫителӗклӗ манӑн, ху пӗлен, пӗччененех пурӑнатӑп...

Председатель йӑрттах ура ҫине тӑчӗ.

— Вӑт, маттур эсӗ, Матӗрне инке! Кун пирки эп хам та сана каласшӑнччӗ-ха, вӑхӑт пулманнипе пыраймарӑм ӗнер... Спасибӑ сана! Эс ҫав ҫынсене хӑвӑн патӑнта урама килӗшни—пите аван, сана эпир уншӑн тем чухлех тав тӑвӑпӑр!

— Уй, мӗн тав тумалли пур! Пӳрт пушах вӗт... Пӗччен пурӑнатӑп-иҫ ара...

— Халех киле кай та, хӑнасене йышӑнма хатӗрлен. Вӗсем кӑҫӗр клубра ҫӗр выртрӗҫ, вараракхпа сан патна илсе пырӑпӑр.

— Хӑвӑра тавтапуҫ мана тиркеменшӗн,—хӗрелсе-кайсах мӑкӑртатса илчӗ Матӗрне инке.—Маншӑн ку савӑнӑҫлӑ кӑна пулать. Тӑвансене пӑхнӑ пекех пӑхса пурӑнӑп эп вӗсене...

Правленирен вӗсем пӗрлех тухрӗҫ. Уйрӑлса кайнӑ чух Иван Ильич ӑна тепӗр хут:

— Ну, хатӗрлен эппин,—терӗ.

— Юрать, юрать,—пуҫӗпе темиҫе хут сулса илчӗ Матӗрне инке.

Киле ҫитсенех вӑл пӳрт ӑшчиккине тирпейлерӗ, урайне ҫуса тухрӗ, сӗтелне витрӗ. Унтан темиҫе хут та урама тухса-тухса пӑхрӗ. Вӑхӑчӗ пит нумай иртнӗн туйӑнчӗ ӑна. Ма килмеҫҫӗ-ха тата хӑнисем? Аптрарӗ ӗнте, вӑл правление тепре чупса кайрӗ. Хуларан килнисем шӑпах ун патне кайма хатӗрленсе тӑнӑ-мӗн.

— Акӑ, сирӗн килхуҫи хӑй те ҫитрӗ,—терӗ ӑна курсан комсомол секретарӗ Алтук.—Паллашӑр, ҫак ыраӑрах сан ӳкӗтсем пулаҫҫӗ, Матӗрне инке.

— Эпӗ,—терӗ хӗрарӑмӗ, Матӗрнене алӑ парса.

Унӑн шухӑшӗсем кӑна кӑйӗсем ҫав тери хӑйӑллӑн пӑхаҫҫӗ. [illegible] ҫинче пӗт-пӗт [illegible] ҫӗмӗрсе [illegible]. Хӑй кӑтрашкиллӗ [illegible] ҫинчи [illegible].

([illegible])

СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министерствинче

Декабрӗн 7-мӗшӗнче США посолӗ Ч. Боден господин СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Министрӗ В. М. Молотов патне пырса кайнӑ, президент Эйзенхауэр ООН Генеральнӑй Ассамблейинче декабрӗн 8-мӗшӗнче атомлӑ хӗçпӑшал çинчен тӑракан ыйту тӑрӑх сӑмах тухса калассине çинчен пӗлтернӗ. Хӑйӗн правительстви хушнипе тесе, посол США президенчӗ калакан сӑмахра пулакан сӗнӳсем çине асӑрхаса пӑхма ыйтнӑ.

Пӗлтернӗшӗн посола тав туса, В. М. Молотов çапла каланӑ: атомлӑ хӗçпӑшал çинчен тӑракан ыйту питех те кирлӗ ыйту пулса тӑрать, Совет Правительстви ку ыйтупа США президенчӗ тухса калакан сӑмах çине, ун пек чухне халиччен тунӑ пекех, тимлӗн пӑхӗ.

Декабрӗн 9-мӗшӗнче Ч. Болен господин В. М. Молотов ячӗпе çырнӑ çырура президент Эйзенхауэрӑн сӳлте асӑннӑ сӑмахӗнчи хӑшпӗр вырӑнӗсене илсе кӑтартнӑ.

Чехословакипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх уйӑхлӑхӗ вӗçленнӗ

ПРАГА, декабрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Чехословакипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх уйӑхлӑхӗ вӗçленнӗ.

Чехословакипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх Союзӗн генеральнӑй секретарӗ Олег Гомола уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче туса иртнернӗ ӗçсене çӗршыври ӗççыннисен пысӑк пайӗ хутшӑнни çинчен калаça панӑ.

Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 çул тултарнӑ ятпа облаçсемпе район центрӗсенче митингсем пулса иртнӗ. Вӑл митингсене 2 миллион çын ытла хутшӑннӑ. Кӑçал «Послание дружбы и мира» ятлӑ традицилле эстафетӑна 797 пин çын хутшӑннӑ.

Словакире декабрӗн 6-мӗшӗ тӗлне 10 пин лекципе доклад ирттернӗ. Вӗсене пӗр миллион çын ытла итленӗ. Кӑçал лекцисемпе докладсен тематикине те чылай ӳстернӗ. Уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче «Совет Союзӗпе пӗрле—çирӗп миршӗн», «Чехословакипе Совет Союзӗ хушшинче туслӑ пурӑнасси, пӗр-пӗрне пулӑшасси тата вӑрçӑ хыççӑн пӗрле килӗштерсе ӗçлесси çинчен договор тунӑранпа вунӑ çул тултарни», «Комсомол çинчен», «Совет промышленноçӗ пиллӗкмӗш пилӗкçуллӑхра» тата ытти темӑсем тӑрӑх та докладсем туса панӑ.

Словакире декабрӗн 6-мӗшӗ тӗлне предприятисенче 546 конференци иртнернӗ. Унта Совет Союзӗнче ӗçре малта пыракансен ӗç меслечӗсене сӳтсе явнӑ. Çак конференцисене рабочисем, инженерсемпе техниксем пурӗ 32 пин çын хутшӑннӑ. Словакири пӗрлӗхлӗ ялхуçалӑх кооперативӗсенче Совет Союзӗнчи ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен ӗç меслечӗсем çинчен 83 конференци иртнернӗ.

Польшӑра ялхуçалӑхне механизацилеççӗ

ВАРШАВА, декабрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Польша Халӑх республикинче ялхуçалӑхне механизацилесси ӑнаçлӑн пурнӑçа кӗрсе пырать. Çӗршыври машина-трактор станцийӗсем, государствӑн ялсенчи хуçалӑхӗсем тата производствӑлла çӗрӗç кооперативӗсем ялхуçалӑх машинисем ытларах та ытларах илсе тӑраççӗ.

Кӑçал çӗршыври ялхуçалӑхӗ валли машинӑсемпе оборудовани, 1949 çулхипе танлаштарсан, 2,4 хут ытларах уйӑрса параççӗ. Ялхуçалӑх машиностроенийӗн даврӑк отраслӗ—тракторостроени пысӑк хӑвӑртлӑхпа аталанса пырать. Тракторсем тӑвакан «Урсус» завод трактор туса кӑларассине султан-сул ӳстерсе пырать. Çапла, 1949 çулта завод 2.500 трактор туса кӑларнӑ пулсан, кӑçал вӑл 6.700 трактор туса кӑларать.

Ытти ялхуçалӑх машинисем туса кӑларасси те ӳссе пырать. Кӑçалхи 9 уйӑх хушшинче кӑна ялхуçалӑхне 5.900 трактор, 8.200 сеялка, 300 ытла комбайн, тракторпа тата лаша вӑйӗпе ӗçлекен косилкӑсем 1.700, кӗлте çыхакан машинӑсем 2.800, çавӑн пекех ытти ялхуçалӑх машинисем те нумай панӑ.

Демократиллӗ Германи Республикин Министрӗсен Совечӗн ларӑвӗнче

БЕРЛИН, декабрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Демократиллӗ Германи Республикин Министрӗсен Совечӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. Унта 1954 çул валли тунӑ халӑх хуçалӑх планне пахса тухнӑ.

Çак ыйту тӑрӑх Государство план Комиссийӗн председателӗ Бруно Лейшнер тухса каланӑ. Вӑл çакна кӑтартса панӑ: Демократиллӗ Германи Республикинчи халӑхӑн пурнӑç условийӗсене малалла лайӑхлатса пырасси çинчен тӑракан ыйтусем 1954 çул валли тунӑ халӑх хуçалӑх планӗнчи тӗп ыйтусемпе тачӑ çыхӑнса тӑраççӗ. Лейшнер çапла пӗлтернӗ: 1954 çулхи план тӑрӑх куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине, 1953 çулхипе танлаштарсан, 23,5 процент ӳстерме палӑртнӑ.

Лейшнер малалла куллен кирлӗ таварсен пахалӑхне лайӑхлатассишӗн тата вӗсен ассортиментне ӳстерессишӗн кӗрешӳ сарса яма кирлине кӑтартса панӑ. Çавна май Лейшнер çакна палӑртнӑ: суту-илӳ работникӗсен предприятисем умне пысӑк пахалӑхлӑ продукци кӑна туса кӑларма требовани лартмалла. Лейшнер çапла пӗлтернӗ: правительство ӗççыннисен пурнӑç условийӗсене лайӑхлатас шутпа йышӑннӑ мерӑсене пула, Демократиллӗ Германи Республикинчи ӗççыннисем, 1950 çулхипе танлаштарсан, 87 процент ытларах тавар туяннӑ.

Лейшнер планра промышленность продукцийӗ туса кӑларассине, уйрӑммӑн илсен, электроэнерги туса кӑларассине тата çӗр кӑмрӑкӗ кӑларассине ӳстерме палӑртни çинчен пӗлтернӗ. Вӑл çакна паллӑ тунӑ: халӑх хуçалӑх планӗнче ялхуçалӑхӗ умне кӑларса тӑратнӑ задачӑсем ӗççыннисен пурнӑçне лайӑхлатас тӗллевпе тытса пыракан политикӑпа уйрӑлми тачӑ çыхӑнса тӑраççӗ.

Министрсен Совечӗ Демократиллӗ Германи Республикин 1954 çулхи халӑх хуçалӑх планӗ çинчен калакан закон проектне ырланӑ.

Матӗрне инке пӗччен мар

(Юлашки. Пуçламӑшӗ 3-мӗш страницӑра).

— Валериан Петрович,—терӗ ун хыççӑн арçынӗ, арӑмӗ пекех ал парса.—Чӑрмантармӑпӑр-ши?

— Уй! ун çинчен ан та калаçӑр,—аллипе сулчӗ Матӗрне.

— Ак ку—пирӗн Валя,—тӗлӗнсе пӑхса ларакан хӗрачи çине кӑтартрӗ агроном.—Çынсене пит час тӑнӑхать...

Калаçнӑ чух вӑл тек-текех çӳçӗсене кӑлла шӑлкаласа тӑчӗ. Матӗрне инкене çак çын пӗрре пӑхсанах кӑмӑла кайрӗ...

— Атьӑр эппин, атьӑр, сирӗн апат та çиес килет пулӗ, хатӗрленсех тӑраттӑм-ха.

Вӗсем пурте пӗрле тухса утрӗç.

Çак кунтан пуçласа, Матӗрне килӗнчен çын татӑлма пӑрахрӗ. Пӗри кайнӑ çӗре тепри пырать, хӑш чух пӳрт тулли хӑнах пухӑнать халӑх. Пӗрисем Валериан Петровичпа Зина патне ӗçпе пыраççӗ, теприсем ятарласах калаçса ларма пыраççӗ. Матӗрне инке хӑй те хавасланӗ пурӑнма пуçларӗ. Ку таранччен вӑл хӑйӗн ӗмӗрне пӗр-пӗчченех пурӑнса иртгермелле пулать пуль, тесе шутланӑччӗ, анчах та йӑнӑшнӑ иккен. Халь ӗнтӗ вӑл пӗччен мар, унӑн тӑвансем пекех çывӑх çынсем пур. Лайӑх-ске ушкӑнпа пурӑнма, çав тери лайӑх!..

Хуларан килнӗ çынсем иккӗшӗ те питӗ аван çынсем пулнӑ. Вӗсене Матӗрне инке кӑна мар, пурте ыратрӗç:

— Пулӗççӗ вӗт çавӑн пек ырӑ кӑмӑллӑ çынсем!—...

Матӗрне инке вӗсен ачине [illegible] пухӑнчӗ. [illegible] ... ушкӑнпа ... та [illegible].

— Аванне, аванне! — тесе чупать ун хыççӑн.

[illegible]

кӳршӗ ялне кайнӑччӗ те, сумӑр айне пулса лачкам шыв таврӑнчӗ. Шӑпах ун патне Брахвине кинемей пырса ларнӑ-мӗн. Зинӑсем килнӗрен вара, вӑл кашни кун тенӗ пекех пырать. Хула çыннисем ӑна та кӑмӑла кайнӑ пулас çав.

Матӗрне çав тери йӗпеннине курсан, Зина хыпӑнсах ӳкрӗ.

— Ара, шӑнса пӑсӑлатӑн вӗт, инке! Ма ӑçта та пулин кӗтсе тӑмарӑн çумӑрӗ иртсе кайиччен?

Вӑл карчӑка васкасах салтӑнтарма тытӑнчӗ, чемоданӗнчен ӑшӑ халат туртса кӑларчӗ.

— Ме, çакна тӑхӑнӑ часрах! Халех сӑмавар лартатӑп, пылпа ӗçсе ӑшӑнӑн... Юрать-и?

— Кун пекех ан хыпкалан ӗнтӗ... — именерех мӑкӑртатса илчӗ Матӗрне. — Хамах эпӗ, хамах...

— Камшӑн хыпкаланас манӑн? Эсӗ пирӗн анне вырӑнӗнче те халь!—терӗ Зина.

— Тӗрӗс, тӗрӗс, Зина,—терӗ çав вӑхӑтра малти пӳлӗмрен тухса тӑнӑ Валериан Петрович.—Пирӗн инкемӗрӗн те аннесем çук, халь акӑ—тупрӑмӑр хамӑр аннене...

Тепӗр, çак сӑмахсем хыççӑн Матӗрне инкен куçӗсем шывланса кайрӗç, чӗри хытӑн-хытӑн тапма пуçларӗ. Паллах, савӑнипе пулчӗ ку, урӑх нимӗншӗн те мар...

— Тавтапуçах, ачамсем...—пӑшӑлтатса илчӗ вӑл.—Эп хам та ачасене тупрӑм çав...

Брахвине кинемей те тӳсеймерӗ, хӑй шухӑшне каласа хучӗ:

— Пахалӑхлӑ çынсем çакӑн пек тупӑнни пӗтӗмпе ... лайӑх, тӗнчере те курман,—терӗ вӑл.

Александра НАЗАРЕВА.

Тӗнчери лару-тӑру

ХӖВЕЛАНАÇӖНЧИ ВИÇӖ ДЕРЖАВӐН БЕРМУД УТРАВӖСЕМ ÇИНЧИ КАНАШЛĂВЕ

Америкӑран инçех мар Атлантика океанӗнче вырнаçнӑ Бермуд утравӗсем çинче нумаях пулмасть США, Англи тата Франци правительствисен пуçлӑхӗсен канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Канашлӑва çавӑн пекех хӗвеланаçӗнчи çак виçӗ державӑн ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗсем, нумай экспертсем хутшӑннӑ.

Çак калаçусем пысӑк вӑрттӑнлӑхра иртнӗ. Вӑл калаçусем мӗнле иртни тата вӗсен итогӗсем çинчен çырса, ют çӗршывсенчи хаçатсем çакна кӑтартса параççӗ: Бермуд утравӗсем çинчи канашлу участникӗсем хушшинче сӳтсе явнӑ чылай ыйтусем тӑрӑх пысӑк хирӗçӳсем пулнӑ. Ку вӑл канашлу çинчен пӗлтернинче те паллӑ пулнӑ.

Францири хаçатсем палӑртнӑ тӑрӑх, «пӗлтернине ӑнланмалла мар стильпе çырса хатӗрленӗ. Çав стиль хӑйӗн ятне калама хӑйман политикӑн хатӗрӗ пулса тӑрать». Анчах, правительствӑсен пуçлӑхӗсен юлашки пӗлтернинче уççӑн каламан шухӑшсенче кивӗ политикӑна палӑртма йывӑрах мар. Вӑл политика «вӑй политикипе» çыхӑннӑ. Пӗлтернинче, уйрӑммӑн илсен, çакна паллӑ тунӑ: канашлу участникӗсем хӑйсен вӑйне (çар вӑйне асра тытмалла) «мирпе хӑрушсӑрлӑхӑн шанчӑкӗ» тесе шутлаççӗ, вӗсем малашне те «çак вӑя» малалла ӳстерсе пырас тӗллевпе вӑй хурса ӗçлесси çинчен пӗлтернӗ. Урӑхла каласан—малашне тата ытларах хӗçпӑшалланмалла. Пӗлтернинче çакна палӑртнӑ: канашлу участникӗсен политикин никӗсӗ Сурçӗр Атлантика договорӗ тӗкенсерӗ (США ертсе пыракан капитализмла 14 государство çав договор тӑрӑх агрессиллӗ çар союзӗ туса хунӑ) пулнӑ, малашне те çавах пулать. Пӗлтернинче малалла канашлура пӑхса тухнӑ ыйтусене кӑтартса панӑ. Вӗсем хушшинче çакӑн пек ыйтусем пур: Германи çинчен тӑракан ыйту, «Европӑри оборона пӗрлешӗвӗ» тӗкенскерӗн, урӑхла каласан, «Европа çарӗн» кун-çулӗ çинчен тата Инçет Хӗвелтухӑçӗ çинчен тӑракан ыйтусем.

Влаçра тӑракан ушкӑнсемпе çывӑх тӑракан нумай буржуалла хаçатсем, сӑмахран, Лондонри «Таймс» хаçат, çакна йышӑнаççӗ: пӗр-пӗрин хушшинче пысӑк хирӗçӳсем пулнӑ пирки Бермуд утравӗсем çинчи канашлӑвӑн участникӗсем кӑткӑс ыйтусенчен хӑшпӗр ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӑна решенисем йышӑнма пултарнӑ. Америкӑри хаçатсем çырнисенче те çав шухӑшах палӑрать. Скриппс-Говард ятлӑ хаçат трестӗн корреспонденчӗ Шэкфорд çапла çырать: «Государство деятелӗсенчен никӑшӗ те Бермуд утравӗсем çинчи канашлура хӑй мӗн тӑвас тенине тӑвайман... Французсем ыттисенчен сахалтарах ӗç тума пултарса килӗсене кайрӗç... Правительство пуçлӑхӗсен тӗлпулӑвӗ мӗнле пулса иртнине пытарса тӑнӑ. Çавӑх та сӑрхӑнса тухнӑ сведенисем мӗнпур енӗсен ӗмӗчӗ пурнӑçланманни çинчен калаççӗ. Американецсем Черчилльпе, акӑлчансем Эйзенхауэрпа кӑмӑлсӑр пулнӑ. Вӗсем иккӗшӗ те, Черчилльпе Эйзенхауэр, французсен позицийӗ пирки кӑмӑлсӑр пулнӑ тата кӳреннӗ».

Ют çӗршывсенчи хаçатсенчен пурте тенӗ пекех çапла шутлаççӗ: Совет Союзӗ тӑватӑ держава представителӗсен канашлӑвне пухасси çинчен панӑ сӗнӗве йышӑнни Бермуд утравӗсем çинчи канашлури пӗртен-пӗр паллӑ та конкретлӑ результат пулнӑ.

Анчах кунта пӗчӗк мар вырӑн йышӑнса тӑракан пӗр условие асра тытни кирлӗ. Ӗç çакӑн пек: ют çӗршывсенчи хаçатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Америка дипломатийӗ, Бермуд утравӗсем çинче канашлу иртгерме хатӗрленсе, тӑватӑ державӑн канашлӑвӗ çинчен тӑракан ыйтӑва пачах айккине пӑрса хӑварасшӑн пулнӑ, хӑйӗн юлташӗсене те çапла тутарасшӑн пулнӑ. Тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене калаçусем иртгернипе татса парас, çапла майпа тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатас тӗллевпе Совет Союзӗпе тӗл пулма шутламаннине США-ри влаçра тӑракан ушкӑнсем суя сӑмахсемпе пытарма хӑтланнӑ. Çав шутпа вӗсем Совет правительстви ноябрӗн 3-мӗшӗнче панӑ нотӑн шухӑшне пӑсса кӑтартнӑ. Шӑпах çав тӗллевпе ӗнтӗ Совет Союзӗ тӑватӑ державӑн канашлӑвне пухма килӗшмест тесе пропагандӑлла шӑв-шӑв шухӑшласа кӑларнӑ.

«Чикаго дейли ньюс» хаçат кун пирки уççӑнах çапла çырнӑ: «Европӑри оборона пӗрлешӗвне», урӑхла каласан, çав «Европа çарне» тӑвассине пурнӑçа кӗртиччен (çӗнӗрен çӗкленнӗ Германи вермахчӗ «Европа çарӗнче» тӗп вӑй пулмалла) США-ри влаçра тӑракан ушкӑнсем Совет Союзӗпе тӗл пуласшӑн мар.

Совет правительстви ноябрӗн 26-мӗшӗнче панӑ нотӑра тӑватӑ державӑн канашлӑвне хирӗç тӑракансен суйине тӑрӑ шыв çине кӑларнӑ. Çав нота хыççӑн Англипе Франци представителӗсем, хӑйсен çӗршывӗсенчи общественность шухӑшкӑмӑлне шута илме тивнӗ пирки, Совет Союзӗ панӑ сӗнӗве йышӑнмасӑр тӑма пултарайман. США представителӗсен çак пункт тӗлӗшпе хӑйсен «кӗçӗн партнерӗсемпе» килӗшме тивнӗ. Çавӑнпа та Францири «Либерасьон» хаçат: Совет Союзӗ тӑватӑ державӑн канашлӑвне пухасси çинчен панӑ сӗнӗве йышӑнни хӗвеланаçӗнчи виçӗ державӑн пуçлӑхӗсенчен мар, общественность енчен хӗсесси никам çӗнеймн вӑйлӑн ӳсе пынинчен килнине халӑхсен ӑнланас пулать», тесе асӑрхаттарни питех те вырӑнлӑ.

«Европа çарне» тӑвасси çинчен тӑракан ыйту тӑрӑх та Бермуд утравӗсем çинчи канашлӑвӑн участникӗсем хушшинче пысӑк хирӗçӳсем тухнӑ. «Европа çарӗ» çинчен витӗнсе, США-ри влаçра тӑракан ушкӑнсем Германи милитаризмӗ тепӗр хут çӗкленнине пытарса хӑварасшӑн. Ассошиэйтед Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Вашингтон представителӗсем: Франци правительствин «Европа çарӗ» çинчен тунӑ договора «тӑватӑ державӑн конференцине пухассине е конференци результачӗсене кӗтмесӗр парламентра çирӗплеттерелле, тесе çине тӑнӑ. Анчах Ланьельпе Бидо Франци парламентӗнче çак договора хытӑ хирӗç тӑнине манма пултарайман. Франци халӑхӗн ытларахӑшӗ Германи милитаризмӗ тепӗр хут çӗкленнине хирӗç протестленӗ пирки вара асӑнма та кирлӗ мар. Анчах Черчилль США Францие хӗснине ырланӑ.

Бермуд утравӗсем çинчи канашлӑва хутшӑннӑ нумай корреспондентсем пӗлтернинчен çакӑ паллӑ: Францие Индо-Китай çинчен тӑракан ыйту пирки те хӗснӗ. США представителӗсем, тесе çыраççӗ Англири хаçатсем, çапла пӗлтернӗ: Франци правительстви Индо-Китайри лару-тӑрӑва мирлӗ майпа татса парас тӗлӗшпе мӗнле те пулин утӑм тӑвас пулсан, США нимӗн тӑхтаса тӑмасӑр «хӑй Франци тӗлӗшпе тытса пыракан политикине тепӗр хут пӑхса тухӗ. Францие «тепӗр хут хӗçпӑшалланнӑ Германи умне пӗччен тӑратса хӑварӗ». Çавна май Англири «Дейли экспресс» хаçат çакӑн çинчен аса илтерет: «Французсем конференцирен салхуллӑн тата хурланса таврӑннӑ пирки тӗлӗнмелли çук».

Инçет Хӗвелтухӑçӗнчи ыйтусем пирки те виçӗ держава хушшинче пысӑк хирӗçӳсем тухнӑ.

Çавӑнпа та Хӗвеланаç Европӑри хаçатсем хӗвеланаçӗнчи виçӗ державӑн Бермуд утравӗсем çинчи сепаратнӑй канашлӑвӗн итогӗсене хак панӑ чухне палӑракан пессимизм мӗншӗн пулнине ӑнланмалла. Вӑл итогсем çакӑн çинчен калаççӗ: канашлу унта хутшӑннӑ çӗршывсем хушшинчи пысӑк хирӗçӳсене пӗтермен кӑна мар, çав хирӗçӳсене пысӑклатнӑ çеç. Ку вӑл тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене сепаратнӑй майпа, вӑйлӑрахисем вӑйсӑррисене хӗсӗнипе, интересленекен енӗсем пӗр-пӗрин прависене хисеплемесӗр татса пама юраманни çинчен тепӗр хут калать.

АМЕРИКА ИМПЕРИАЛИСЧӖСЕН ПАКИСТАНРИ УСАЛ ĖÇĖСЕМ

Америкӑри влаçра тӑракан ушкӑнсем çӗр чӑмӑрӗн тӗрлӗ пайӗсенче çар плацдармӗсем тӑвассине хӑйсен стратегийӗнче малти вырӑна хураççӗ. Ют çӗршывсенчи хаçатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, США хӑйӗн çар авиаци базисене тӗнчери 49 çӗршывра тунӑ ӗнтӗ. Пакистана хӑйсен агрессиллӗ планӗсене пурнӑçлас çӗре хутшӑнтарас тӗллевпе халӗ Америка империалисчӗсем унта усал чее ӗçсем тӑваççӗ. Пакистана хӑйӗн агрессиллӗ планӗсене пурнӑçлама хутшӑнтарса, США Иранпа араб государствисене хӗсессине тата ытларах вӑйлатасшӑн. США Иранпа араб государствисене Çывӑх Хӗвелтухӑçӗнчи агрессиллӗ блока кӗртме хытӑ тӑрӑшать.

Америка влаçӗсем Пакистан вӗсемшӗн мӗнле пӗлтерӗшлӗ пулнине Нью-Йоркра тухса тӑракан «Ньюс уик» журнал нумаях пулмасть çырса кӑтартнӑ. «Пакистан,—тесе çырнӑ журнал,—тӳрех вырӑс державин çывӑхӗнче Хайберски ту хырçи леш енче вырнаçнӑ... Пакистан çарӗнче—250.000 çын. Вӗсенчен 13 дивизи организациленӗ. Пакистан çарӗ питӗ чаплӑ çар шутланать, анчах ӑна снаряжени кирлӗ. Пакистанра питӗ лайӑх икӗ аэропорт пур... Аэропортсенчен иккӗшӗ те реактивлӑ самолетсене йышӑнма пултараççӗ. Çак аэродромсем Англипе Америкӑн хальхи вӑхӑтри сывлӑш-çар базисене çарса пыма май парӗччӗç».

Çавна май США вице-президенчӗ Никсон, Азири çӗршывсем тӑрӑх çӳрекенскер, нумаях пулмасть Пакистан столицине пырса кайни çинчен асӑнмалла.

США Америкӑпа Пакистан хушшинче çар союзӗ тума шутланӑ пирки, Никсон Пакистана пырса кайнӑ, тесе шутлать Пакистанри общественность. Çакӑ питех те паллӑ: вице-президент Карачине пырса кайни Гулям Мохаммед генерал-губернатор Пакистана таврӑннипе пӗр вӑхӑтра пулнӑ. Гулям Мохаммед нумай вӑхӑт хушши США-ра «хӑнара» пурӑннӑ.

Индири хаçатсем Никсон Пакистан премьер-министрӗпе Мохаммед Алипе тата Пакистан çарӗн главнокомандующийӗпе арми генералӗпе Айюб-ханпа калаçусем иртгерни çинчен пӗлтереççӗ. Никсон хӑйӗн сӑмахӗсенчен пӗринче: США «Пакистана хӳтӗлӗ», тесе каланӑ.

«Доон» хаçат, Никсон Пакистан влаçӗсемпе калаçни çинчен çырса, çапла паллӑ тӑвать: Никсон калаçнине общественность Пакистанпа США хушшинче çар килӗшӗвӗ тунине е килӗшӳ тӑвасси вӗçленесе пынине пӗлтерет, тесе шутлать.

Пакистанпа США хушшинчи çар союзӗ çинчен калаçусем пынӑ пирки Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑç Азири çӗршывсенче пӑшӑрханаççӗ. Çак çӗршывсенчи общественность тӗнчен çак районӗнче агрессиллӗ блок тума тӑрӑшакан Америка империалисчӗсен ӗçӗсене хирӗç хаярран протестлет. Индири «Дейли таймс» хаçат çапла пӗлтерет: «Америка Пакистан территорийӗ çинче хӑйӗн çар базисене туни Индин, çавӑн пекех Пакистанӑн пӗрлехӗпе ирӗклӗхӗшӗн хӑрушлӑх пулса тӑрать».

Пакистанра та Америкӑн агрессиллӗ планӗсене хирӗç протестлесси ӳссе пырать. Пакистан общественноçӗн йышлӑ представителӗсем — тӗрлӗ шухӑш-кӑмӑл тытакансем—хӑйсен çӗршывӗнчен Америкӑн çар плацдармӗ туса пынине хирӗç тӑраççӗ. Халӑхӑн Джина ячӗпе тӑракан мусульман лигийӗ ятлӑ партин, «Азот Пакистан» партийӗн, Пакистанри мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен комитетӑн, Синд провинцийӗнчи профсоюзсен комитечӗн тата ытти организацисен представителӗсем хаçатра çыру пичетлесе кӑларнӑ. Унта вӗсем: правительство нимӗнле союзсене те хутшӑнмӗ, çак тӗлӗшпе нимӗнле обязательствӑсем те илмӗ, нейтралитет политики тытса пырӗ, пӗр вӑхӑтрах хӑйӗн влиянийӗпе тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатас çӗрте усӑ курӗ тата ытти мусульман çӗршывӗсене хӑйсен ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӗвӗнче пулӑшса пырӗ, тесе пӗлтерме правительствӑна чӗнсе каланӑ.

Н. ЗАХАРОВ.

Францири Наци пухӑвӗн депутачӗсем Польшӑран тухса кайнӑ

ВАРШАВА, декабрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Польша Халӑх Республикинче пӗр эрне хушши пурӑннӑ хыççӑн, ӗнер Францири Наци пухӑвӗн депутачӗсен ушкӑнӗ Варшавӑран Парижа тухса кайнӑ. Хӑнасем Варшава, Гданьск, Гдыня, Сопот, Вроцлав, Краков хулисенче пулнӑ. Унта вӗсем хуларн чи паллӑ вырӑнӗсемпе паллашнӑ. Вӗсем хулари стройкӑсене, «Новая Гута» металлурги комбинатне тата Вроцлаври вагонсем тӑвакан «Пафавак» заводне пырса курнӑ. Хӑнасем Польша Халӑх Республикин сеймӗн депутачӗсемпе тата Вроцлаври Болеслав Берут ячӗпе тӑракан университетри профессорсемпе тӗл пулнӑ. Хӑнасем, çавӑн пекех «Мазовше» [illegible] концертӗнче пулнӑ.

Ӗнер каçхине Варшавӑра ют çӗршывсемпе культурӑлла çыхӑну тытакан Польша комитечӗ Францири Наци пухӑвӗн депутачӗсене хисеплесе йышӑну иртгернӗ. Йышӑнура Польша сеймӗн депутачӗсем, çавӑн пекех наукӑпа культура представителӗсем пулнӑ.

США-ра ӗççӗрлӗх ӳссе пырать

НЬЮ-ЙОРК, декабрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). США-ри ӗç министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, халӑх хуçалӑхӗн мӗнпур отраслӗсенче ӗçлекен рабочисен хисепӗ, ялхуçалӑхӗнче ӗçлекен рабочисемсӗр пуçне, пӗр уйӑх хушшинче 370 пин çын чакнӑ. Автомобиль, металран япаласем тӑвакан промышленноçра, пир-авӑр машинисем тӑвакан предприятисенче тата резина промышленноçӗнче ӗçлекен рабочисен хисепӗ уйрӑммӑнах нумай чакнӑ.

Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ статистика сведенийӗсем тӑрӑх, металран япаласем тӑвакан промышленноçра кӑна август уйӑхӗнче 554 пин рабочи ӗçрен кӑларса янӑ.

Унсӑр пуçне, официальнӑй сведенисем çителӗклӗ таран ӗç тупма пултарайман çынсен хисепӗ ӳснине кӑтартса параççӗ. Ӗç министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, металран япаласем тӑвакан промышленноçра рабочисен ӗç эрнин вӑрӑмӑшӗ ноябрь уйӑхӗнче вӑтам шутпа 39,9 сехет таран чакнӑ.

Ӗнер «Уолл-стрит джорнэл» хаçатӑн корреспонденчӗ Детройтран çапла пӗлтернӗ: автомобиль промышленноçӗнче ӗççӗрлӗх уйрӑмах пысӑк. Унта концернсем производствӑра чакарса пыраççӗ, тесе вӗсем туса кӑларнӑ автомашинисене сутса пӗтерме пултараймаççӗ. «Уолл-стрит джорнэл» хаçат çапла пӗлтерет: декабрӗн 10-мӗшӗнче «Нэш кельвинейтор корпорейшн» фирма «производствӑна татах та туса кӑларакан продукцие тупнассипе танлаштарас тесе», декабрӗн 21-мӗшӗнчен пуçласа январӗн 4-мӗшӗ хушшинче автомашинӑсем туса кӑларма чарӑнасси çинчен пӗлтернӗ. Ку вӑл 8 пин рабочи ӗçрен кӑларса яраласса пӗлтерет. Автомобильсем туса кӑларакан «Крейслер» компани декабрӗн 10-мӗшӗнче хӑйӗн Детройтри икӗ заводӗнчен 3.900 рабочие ыхӑн ӗçрен кӑларса ярасси çинчен пӗлтернӗ. Автомобиль промышленноçӗнче ӗççӗр пурӑнакан рабочисем мӗн чухлӗ пулни Мичиган штатӗнчи ӗç ыйтӑвӗсем енӗпе ӗçлекен комисси тунӑ докладран лайӑх курӑнать. Çав комиссин çапла пӗлтернӗ: ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне штатра ӗç тупайманнисен хисепӗ 125 пин çын пулнӑ. Ку вӑхӑтра уйӑхӗнчинчен 80 пин рабочи ытларах пулать.

Экономика тӗлӗшӗнчен вӑйсӑрланса пынӑ май, промышленноçӑн ытти отраслӗсенче те ӗççӗрлӗх ӳссе пырать. Чугун сулсем тӑрӑх поездсем çӳресси чакнипе пула, декабрӗн 8-мӗшӗнче «Пенсильвани рейлроуд» компани 7.400 рабочие ӗçрен кӑларса ярасси çинчен пӗлтернӗ.

„Коммунизм ялавӗ" хаçатра çырнӑ хыççӑн

«ЯЛ СОВЕТ КАНЦЕЛЯРИЙӖСЕМ ÇИНЧЕН»

Ӗççынни депутачӗсен Красноармейски район Совечӗн исполкомӗ октябрӗн 18-мӗшӗнче «Коммунизм ялавӗ» хаçатра пичетленнӗ «Ял Совет канцелярийӗсем çинчен» ятлӑ çырӑва Ямайкасси ял Совет исполкомӗн ларӑвӗнче сӳтсе явни, çырура кӑтартнӑ çитменлӗхсене пӗтӗмпех пӗтерни çинчен пӗлтерчӗ.

Пӗлтерни

Декабрӗн 15-мӗшӗнче, 20 сехетре, КПСС хула комитечӗн библиотека çуртӗнче политикӑлла экономие вӗренекенсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Таварлӑ производство. Тавар тата укçа».

Лектор—Я. Г. Железнов юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧӖ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧАВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРЕНЧЕ—декабрӗн 15-мӗшӗнче выраçла спектакль «Не называя фамилий». (Пави спектакль курма билетсем сутса пӗтернӗ).

КИНО

«УДАРНИК»—декабрӗн 15-мӗшӗнче Венгрире ӳкернӗ илемлӗ фильм «Потерянная мелодия».

СССР халӑх хуçалӑхне аталантармалли государство заемӗ (1952 çулхи кӑларӑм)

2-мӗш вылявра выигрышсем тухнине кӑтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 çулхи декабрӗн 6-мӗшӗнче Ставрополь хулинче пулнӑ.

Таблицӑра 100 тенкелӗх облигацисем çине выигрышсем тухнине кӑтартнӑ. Выигрыш суммине выляса илнӗ облигаци хакӗ те кӗрет.

Заемӑн мӗнпур разрячӗсенчи çак серисемпе облигацисен номерӗсем çине выигрыш тухнӑ:

Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкӗ	Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкӗ
120048	34*)	1.000	129947	05*)	1.000
120064	50*)	1.000	130057	1—50	200
120076	1—50	200	130207	1—50	500
120093	31*)	1.000	130248	1—50	200
120125	1—50	200	130305	07*)	1.000
120210	07*)	10.000	130327	25*)	5.000
120227	39*)	1.000	130522	1—50	200
120241	01*)	1.000	130691	40*)	1.000
120365	47*)	1.000	130728	1—50	200
120445	20*)	1.000	131063	29*)	1.000
120561	1—50	200	131150	39*)	1.000
120700	11*)	1.000	131167	1—50	200
120948	09*)	1.000	131184	1—50	200
121087	21*)	10.000	131573	43*)	1.000
121173	16*)	1.000	131692	1—50	500
121205	1—50	200	131727	1—50	200
121680	1—50	500	131760	39*)	1.000
121699	07*)	1.000	131765	33*)	1.000
121877	1—50	200	131772	1—50	500
121948	36*)	1.000	131885	1—50	200
121984	19*)	1.000	131936	16*)	5.000
122251	1—50	500	131985	1—50	200
122523	39*)	1.000	132447	29*)	1.000
122531	16*)	1.000	132455	1—50	200
122678	22*)	1.000	132456	36*)	1.000
122699	48*)	10.000	132469	23*)	1.000
122762	30*)	1.000	132492	34*)	1.000
122842	33*)	1.000	132524	30*)	1.000
123065	43*)	1.000	132961	1—50	200
123095	31*)	1.000	132999	14*)	1.000
123136	02*)	1.000	133004	41*)	1.000
123218	03*)	1.000	133118	1—50	200
123412	42*)	1.000	133387	14*)	1.000
123533	1—50	200	133836	1—50	200
123558	1—50	200	133854	1—50	500
123665	15*)	1.000	134126	32*)	5.000
123957	1—50	200	134251	33*)	1.000
124214	04*)	5.000	134458	1—50	200
124239	21*)	1.000	134533	15*)	1.000
124380	34*)	1.000	134548	1—50	200
124531	04*)	1.000	134657	38*)	1.000
124554	10*)	10.000	134742	48*)	1.000
124559	1—50	500	134868	1—50	500
124718	1—50	500	134934	1—50	200
124826	17*)	1.000	134988	38*)	1.000
124846	09*)	5.000	135003	23*)	1.000
124988	1—50	200	135091	40*)	1.000
125543	1—50	500	135310	37*)	1.000
125563	11*)	1.000	135346	32*)	1.000
125754	12*)	1.000	135398	22*)	1.000
126029	07*)	1.000	135466	46*)	1.000
126128	1—50	500	135540	1—50	200
126166	15*)	1.000	135749	14*)	1.000
126175	1—50	200	135990	18*)	1.000
126205	1—50	200	136066	36*)	5.000
126367	42*)	1.000	136088	44*)	1.000
126481	1—50	200	136168	04*)	1.000
126497	22*)	1.000	136265	21*)	5.000
126697	16*)	1.000	136451	36*)	1.000
126920	1—50	500	136585	15*)	1.000
126989	1—50	500	136880	1—50	200
127222	13*)	1.000	137130	1—50	200
127293	1—50	200	137230	05*)	1.000
127332	08*)	1.000	137348	17*)	1.000
127455	11*)	5.000	137433	1—50	200
127511	06*)	1.000	137466	36*)	5.000
127513	05*)	25.000	137499	1—50	200
127574	05*)	1.000	137509	1—50	200
127659	04*)	1.000	137532	50*)	1.000
127819	17*)	1.000	137725	19*)	1.000
127905	1—50	500	137752	1—50	500
128009	03*)	5.000	137802	1—50	200
128230	41*)	10.000	138230	35*)	1.000
128242	1—50	200	138241	07*)	1.000
128340	1—50	200	138457	1—50	200
128474	1—50	200	138553	1—50	200
128475	02*)	1.000	138777	26*)	1.000
128609	1—50	500	138799	11*)	1.000
128732	1—50	500	138802	1—50	200
128734	27*)	1.000	139005	1—50	200
128825	1—50	200	139088	1—50	500
128991	50*)	1.000	139164	1—50	500
129093	29*)	1.000	139225	11*)	1.000
129255	31*)	1.000	139305	12*)	1.000
129432	35*)	1.000	139390	1—50	500
129520	29*)	1.000	139537	1—50	200
129571	32*)	1.000	139618	19*)	1.000
129714	02*)	1.000	139704	44*)	1.000
129745	39*)	1.000	139808	33*)	1.000
129844	38*)	1.000	139869	46*)	1.000
129855	03*)	1.000	139964	1—50	200

*) Çак сери-йӗркесен облигацийӗсен ытти 49 номерӗ 200-шер тенкӗ выляса илнӗ.

ЧАВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧӖН УПРАВЛЕНИЙӖ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. [illegible], 8, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—5-87, редактор заместителӗ—4-17, ответлă секретарь—1-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-92, парти пурнӑç пайӗ—5-85, общество пайӗ—6-44, пропаганда пайӗ—5-61, ялхуçалӑх пайӗ—3-07, культура пайӗ—5-61, совет строительстви пайӗ—3-54, çырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-28.

НТ 09493

Типографи № 1 Министерствӑн культуры Чувашской АССР.

Заказ № 2057. Тираж 15.000 экз.